им. М. Горького

ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

ВКП(б) Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1952 ҫул
Май
18
ВЫРСАРНИКУН
№ 98 (8750)
Хакӗ 20 пус.
35-мӗш ҫул тухать.

Паянхи номерте:

Ҫураки планне мӗнпур ялхуҫалӑх культурисем тӑрӑх тултарассишӗн кӗрешер! (1 стр.).

Америка ҫар ҫыннисен тискерлӗхӗ (1 стр.).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ: **Д. Дубинин.**—Йышӑннӑ обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫламалла; **Г. Алексеев.**—Парти райкомӗ профсоюз ӗҫне ертсе пыни (2 стр.).

П. Павлов.—Тракторсемпе тухӑҫлӑ ӗҫлеме мӗн чӑрмантарать (2 стр.).

П. Краснов.—Тупӑшлӑ выльӑх-чӗрлӗхшӗн кӗрешмелле (2 стр.).

Паха та илемлӗ ҫулсемшӗн (3 стр.).

Г. Исаев.—Ялти фельдшер (3 стр.).

Вырӑнти Советсенче (3 стр.).

Д. Бочаров.—Тӗнчери лару-тӑру (4 стр.).

Пакистанри культура деятелӗсем ССР Союзӗнче мӗн курни ҫинчен каласа параҫҫӗ (4 стр.).

Корейӑри ӗҫсем (4 стр.).

Азири тата Лӑпкӑ океан тӑрӑхӗнчи ҫӗршывсенчи миршӗн тӑракансен конференцийӗ пухӑнасси пирки (4 стр.).

Америка империалисчӗсем Индонези экономикине йывӑрлӑха кӗртсе ӳкернӗ (4 стр.).

Ӗҫҫыннисен ҫуллахи канӑвӗ

Пирӗн ҫӗршывра совет ҫыннисен пурнӑҫне лайӑхлатма мӗн кирлине пӗтӗмпех туса панӑ. Совет государстви социальнӑй тата культурӑллӑ ӗҫсем валли укҫа-тенкӗ ҫуллен-ҫул ытларах та ытларах расходлать. Ҫынсем, кадрсем пирӗн ҫӗршывра мӗнпур йышши хаклӑ капиталсенчен чи хакли те, чи пахи пулса тӑраҫҫӗ. Ҫынсен пурнӑҫӗпе ырлӑхӗшӗн тӑрӑшасси—Совет государствин чи паллӑ ӗҫӗсенчен пӗри пулса тӑрать.

«Пирӗн революцин паллӑ уйрӑмлӑхӗ ҫавӑнта пулать: вӑл халӑха ирӗклӗх кӑна мар, тата материальнӑй ырлӑхсем те, пуян та культурӑллӑ пурӑнмалли майсем те туса пачӗ», тет Сталин юлташ.

Сталинла Конституци тӑрӑх совет гражданӗсен ӗҫлев, кану, вӗренӳ прависем, ватӑлсан, ҫавӑн пекех тата чирлесен е ӗҫлейми пулсан материальнӑй пулӑшу илмелли право пур. Ытти мӗнпур правӑсемпе пӗрлех совет ҫыннисем кану правипе те анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Кану прави ӗҫ кунне нормӑланипе, рабочисемпе служащисене ҫулсеренех ӗҫ укҫи тӳлесех отпуск парса тӑнипе, ӗҫҫыннисене усӑ курмашкӑн санаторисем, канмалли ҫуртсем, клубсем нумай туса панипе пурнӑҫа кӗрсе пырать.

Ҫу вӑхӑчӗ—чи лайӑх кану вӑхӑчӗ. Ҫу вӑхӑтӗнче пиншер ӗҫҫыннисем ҫӗршывӑн чаплӑ курорчӗсенче, санаторисемпе канмалли ҫуртсенче пулса хӑйсен сывлӑхӗсене ҫирӗплетеҫҫӗ. Нумайӑшӗсем хамӑр республикӑри канмалли ҫуртсенче пулаҫҫӗ. Ҫул ҫӳреме юратакансем инҫете, туристсен походчӗсене тухса каяҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршывра уйрӑмах ачасен сывлӑхӗсемшӗн хытӑ тӑрӑшаҫҫӗ. Шкул ачисем кӑҫал пионерсен лагерӗсенче йышлӑн пулаҫҫӗ.

Иртнӗ ҫул пирӗн республикӑри вӑрман касакансемпе йывӑҫ юхтаракансен профсоюзӗ енӗпе кӑна курортсенче 200 ҫын, канмалли ҫуртсенче 400 ҫын ытла пулнӑ. Кӑҫал вара канма каякансем татах та нумайтарах пулаҫҫӗ.

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводра ӗҫлекен рабочисемпе служащисенчен кӑҫал 300 ҫынна яхӑн хӑйсен сывлӑхне санаторисемпе кану ҫурчӗсенче ҫирӗплетеҫҫӗ. Кунти рабочисемпе служащисен ачисем валли июнӗн 10-мӗшӗнче ятарласа лагерь уҫаҫҫӗ, унта 300 ача канмалла пулать. Лагерь валли халӗ ҫӗнӗ ҫуртсем тӑваҫҫӗ, киввисене юсаҫҫӗ.

Ҫӗмӗрлери сӗтел-пукан тӑвакан комбинатра та рабочисемпе служащисен канӑвне лайӑх йӗркелеме тӑрӑшаҫҫӗ. Кунта чылай рабочисем санаторисемпе курортсенче пулаҫҫӗ. Иртнӗ уйӑхсенче сиччӗмӗш цехри слесарь А. Князев Кисловодска, тӑваттӑмӗш цехри столяр Н. Тюлин Ессентукине, пиллӗкмӗш цехри станочник Ф. Александров Железноводскра, контрольнӑй мастер Г. Шалфеев Крымра санаторисенче пулса юсанса килнӗ.

Рабочисемпе служащисен сывлӑхне ҫирӗплетес ӗҫре кунта вырӑнти санатори пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Кӑҫал комбинатри кашни ҫичӗ ҫынтан пӗри ҫав санаторинче канма пултарать. Иртнӗ тӑватӑ уйӑх хушшинче 122 ҫын вырӑнти санаторинче каннӑ. Хальхи вӑхӑтра унта 40 ҫын канать. Ҫулталӑк вӗҫлениччен татах тепӗр 300 ҫын канмалла.

Ҫак тӗслӗхсем вӗсем партипе правительство совет ҫыннисен сывлӑхӗшӗн, вӗсен культурӑллӑ канӑвӗшӗн тимлӗн тӑрӑшни ҫинчен калаҫҫӗ.

Республика столицинчи—Шупашкарти ҫынсен юратнӑ кану вырӑнӗ—Атӑл леш енӗ. Кунта канмалли кунсенче пиншер ҫын канать. Ҫитес кунсенчех хулари парксемпе скверсем те уҫӑлмалла. Уҫӑлса ҫӳремелли тепӗр паха вырӑн—Атӑлӑн ку енӗ те ҫулран-ҫул капӑрланать. Атӑл хӗррипе йывӑҫсем лартса тухаҫҫӗ. Пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем валли илемлӗ, сывлӑхшӑн питӗ те усӑллӑ вырӑнсем темӗн чухлех. Ильинкӑри, Шупашкар тӗлӗнчи Атӑл леш енчи, Сӗнтӗрвӑрри ҫывӑхӗнчи канмалли ҫуртсене хамӑр республикӑри районсемпе хуласенчен кӑна мар, ытти крайсемпе облаҫсенчен те ӗҫҫыннисем нумай килеҫҫӗ. Хамӑрӑн вырӑнти санаторисемпе канмалли ҫуртсенче ӗҫлекенсен хисеплӗ задачи вӑл—канма пыракан ҫынсене лайӑх кӗтсе илесси, вӗсен канӑвне чӑннипех те культурӑллӑ, кӑтартуллӑ йӗркелесси пулать.

Садсемпе парксем, шыва кӗмелли вырӑнсем—ҫамрӑксен юратнӑ кану вырӑнӗсем. Ҫамрӑк рабочисемпе работницӑсен, служащисен, студентсемпе шкул ачисен канӑвне лайӑх йӗркелеме тӑрӑшасси комсомол организацийӗсен пархатарлӑ ӗҫӗ пулса тӑрать.

Ҫулла ҫамрӑксем хушшинче физкультурӑпа спорт ӗҫне уйрӑмах анлӑ сарма лайӑх майсем пур. «Хӗвел, сывлӑш тата шыв—пирӗн ҫывӑх туссем»,—теҫҫӗ пирӗн ҫамрӑксем. Вӗсемпе чӑннипех те анлӑн усӑ курни кирлӗ. Ҫакна тумалла: кашни хулапа поселокра стадион е спорт площадки, шыва кӗме ятарласа тунӑ вырӑнсем пулччӑр. Туристсен походчӗсене, экскурсийӗсене час-часах ирттермелле, ҫак ӗҫе ҫамрӑксене ытларах хутшӑнтармалла.

Ҫуллахи каникулсене шкул ачисенчен нумайӑшӗ килтех—хуласемпе поселоксенчех — ирттереҫҫӗ. Вӗсен канӑвӗсем ҫинчен те халех тӗплӗн шухӑшласа пӑхмалла. Калас пулать: чылай профсоюз организацийӗсем, комсомол организацийӗсем, вырӑнти Советсем ӗҫҫыннисен, ача-пӑчасен ҫуллахи канӑвне мӗнле йӗркелесси ҫинчен халӗ те сӳтсе явман-ха. Ку—пысӑк ҫитменлӗх, ӑна сывӑх вӑхӑтрах тӳрлетмелле.

Кашни заводпа фабрика, кашни учреждени коллективӗнче, аласти артелӗнче канмалли кунсене массӑллӑн ирттерес пирки конкретнӑй плансем пулмалла. Канмалли кунсенче спектакльсемпе кинокартинӑсем курас, лекцисемпе докладсем итлес, кӗнекесемпе хаҫат-журналсем кайса вулас текенсем ытти кунсенхинчен нумай ытларах пулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа театрсен, киноустановкӑсен, клубсемпе библиотекӑсен, предприятисемпе учрежденисенчи хӗрлӗ кӗтессен ҫуллахи вӑхӑтра хӑйсен ӗҫне темиҫе хут ытларах лайӑхлатмалла.

Ҫу ҫывхарса ҫитрӗ. Ҫуллахи кану вӑхӑтне лайӑх йӗркелеме мӗн кирлине пурне те халех туса ҫитерес пулать. Ӗҫҫыннисен ҫуллахи канӑвне йӗркелесси—пысӑк та кирлӗ ӗҫ. Пирӗн ҫӗршывра совет ҫыннине — коммунизмлӑ общество строительне культурӑллӑ канма, хӑйӗн сывлӑхне ҫирӗплетме, ҫавна май хӑйӗн производствӑри ӗҫ тухӑҫлӑхне тата ытларах ӳстерме мӗн кирлине пӗтӗмпех туса панӑ, вӗсемпе пӗлсе, анлӑн усӑ курни кӑна кирлӗ.

В. И. Ленин ячӗпе тӑракан пионер организацийӗ 30 ҫул тултарни

Ыран, майӑн 19-мӗшӗнче, В. И. Ленин ячӗпе тӑракан пионер организацийӗ 30 ҫул тултарать.

Вӑтӑр ҫул каярах, 1922 ҫулта, большевиксен партийӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, комсомолӑн Пӗтӗм Союзри конференцийӗ хамӑр ҫӗршыври мӗнпур хуласемпе ялсенче пионер отрячӗсем тӑвасси ҫинчен постановлени йышӑннӑ. 1924 ҫулхи май уйӑхӗнче Мускавра, Хӗрлӗ площадьре, пионерсен парачӗ пулса иртнӗ, унта пионер организацине аслӑ Ленин ятне панине паллӑ тунӑ. Ҫавӑн чухне пионерсем парти умӗнче, Ленин ӗҫӗсене малалла туса пыракан аслӑ Сталин юлташ умӗнче яланах тата пур ҫӗрте те Владимир Ильич Ленин хушса хӑварнисене пурнӑҫласа пыма, ҫамрӑк ленинецсен хисеплӗ ятне чыслӑн тытса пыма сӑмах панӑ.

Ҫак вӑтӑр ҫул хушшинче пионер организацийӗ, большевиксен партийӗ, ленинла-сталинла комсомол ертсе пынипе, мухтавлӑ ҫулпа утса пычӗ. Халӗ шкулта вӗренекен вунтӑхӑр миллион ача пионерта тӑраҫҫӗ.

Совет ҫӗршывӗнчи ачасем — тӗнчери чи савӑнӑҫлӑ та телейлӗ ачасем. Пирӗн парти, социализмлӑ аслӑ Тӑван ҫӗршыв совет ачисемшӗн нимӗн те шеллемеҫҫӗ. «Пирӗн государство вӑл,— тет Сталин юлташ, — ытти пур государствӑсенчен ачасене лайӑх пӑхса ҫитӗнтерес, ҫамрӑксене лайӑх воспитани парас тӗлӗшпе укҫа-тенкӗ шеллеменнипе уйрӑлса тӑрать... Эпӗ пирӗн Совет Союзӗнче ачасемшӗн, вӗсене лайӑх пӑхса ҫитӗнтерессишӗн тӑрӑшни пек урӑх ниҫта та тӑрӑшмаҫҫӗ пулӗ тесе шутлатӑп».

Коммунистсен партийӗ, Совет правительстви пур ачасене те вӗрентессишӗн, вӗсене культурӑллӑ ҫынсем, вӗреннӗ ҫынсем тӑвассишӗн, коммунизмлӑ воспитани парассишӗн яланах тимлӗ тӑрӑшаҫҫӗ.

Пионер дружинисемпе отрячӗсен кулленхи ӗҫне, коммунистсен партийӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, комсомол ертсе пырать. Пионер организацийӗсене ертсе пырас ӗҫе вӑйлатас тӗлӗшпе ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн VII-мӗш пленумӗ тӗплӗ кӑтартусем пачӗ. Республикӑри пионер организацийӗсем ҫирӗпленсе тата ӳссе пыраҫҫӗ. Пионер организацийӗсем шкул ачисене тарӑн та ҫирӗп пӗлӳ парас ӗҫре учительсене хастарлӑ пулӑшаҫҫӗ. Пионерсемпе шкул ачисем обществӑллӑ ӗҫе активлӑ хутшӑнаҫҫӗ. Сӑмахран, юлашки икӗ ҫул хушшинче республикӑри пионерсем пӗр миллион ытла тӗрлӗ улма-ҫырла йывӑҫҫисем лартнӑ.

Ачасем физкультурӑпа спорт ӗҫне те чунтан-чӗререн юратаҫҫӗ. Иртнӗ хӗлте йӗлтӗрпе ярӑнакансен ӑмӑртӑвне 66 865 пионер хутшӑннӑ.

Пионер вӑл—пулас комсомолец. Кашни пионер ВЛКСМ членӗ пулма ӗмӗтленет.

Парти тата комсомол организацийӗсен, В. И. Ленин ячӗпе тӑракан пионер организацийӗ вӑтӑр ҫул тултарнине паллӑ туса, пионер дружинисемпе отрячӗсен ӗҫне лайӑхлатма куллен тӑрӑшмалла, пионер организацийӗсене тӑтӑшах пулӑшса пымалла.

Ҫураки планне мӗнпур ялхуҫалӑх культурисем тӑрӑх тултарассишӗн кӗрешер!

* * *

Виҫӗ республика ӑмӑртӑвӗ

Колхозсемпе МТС-сем майӑн 15-мӗшӗ тӗлне ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планне ҫакӑн чухлӗ тултарнӑ (процентпа):

	Мордва АССР-ӗ	Мари АССР-ӗ	Чӑваш АССР-ӗ
Ҫуртрисем акнӑ	72,1	34,5	65,7
Вӑл шутран тулӑ	109,0	60,0	98,0
Кантӑр	42,0	—	9,7
Пахча ҫимӗҫсем	5,0	1,2	13,8
Пӗр ҫул ӳсекен курӑксем	70,0	5,0	63,9
Нумай ҫул ӳсекен курӑксем	94,1	59,9	111,5
Тымарҫимӗҫсем	59,0	3,3	58,5
Силос тумалли культурӑсем	—	3,1	58,0
Кӗрхи тырӑ калчисене апат панӑ	93,0	67,8	74,7

Малта пыракан механизаторсем

ИШЛЕЙ. МТС-па колхозсем тунӑ договорсене вӑхӑтра тата пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫласси закон пулса тӑрать.

Договорсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе Ишлей машина-трактор станцинче 8-мӗш бригада бригадирӗ Г. Романов юлташ уйрӑмах тӑрӑшса ӗҫлет. Буденный ячӗпе тӑракан колхозра ҫуракинче тума палӑртнӑ ӗҫсене бригада майӑн 8-мӗшӗ тӗлнех пысӑк пахалӑхпа пурнӑҫларӗ. Ун хыҫҫӑн бригада Йӗррӗмӗш Алӗн ял Советӗнчи Андреев ячӗпе тӑракан колхозпа тунӑ договорти ҫурхи уй-хир ӗҫӗсен планне те тултарчӗ. Ҫуркунне 356 гектар сухаланӑ чухлӗ ӗҫ тумалла пулнӑ пулсан, майӑн 14-мӗшӗ тӗлне трактористсем 421 гектар сухаланӑ чухлӗ ӗҫ турӗҫ.

Ҫавӑн пекех Ф. Ерманов юлташ ертсе пыракан бригадӑри механизаторсем те ҫураки планне 106 процент тултарчӗҫ.

Т. Ефимовпа С. Васильев юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем те хӑйсене панӑ заданисене ирттерсе пурнӑҫларӗҫ.

В. ЧЕРНОВ.

Ҫуртрисене акса пӗтерчӗҫ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Красный боец» колхоз ҫуртрисене вунӑ кун хушшинче акса пӗтерме палӑртнӑччӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем тухӑҫлӑ ӗҫлерӗҫ, тӗштырӑсене сакӑр кунта акса пӗтерчӗҫ.

Тырпула пӗтӗмпех сортлӑ тата яровизациленӗ вӑрлӑхпа, кӗрхи ҫӗртме тунӑ уйсене акса хӑварнӑ, хӗреслӗ майпа чылай акнӑ.

Колхоз ҫак кунсенчех ҫӗрулми лартса пӗтерет тата техникӑллӑ культурӑсем акма тытӑнать.

Ҫураки ӗҫӗсем Мичурин ячӗпе тӑракан, «Урожай» тата ытти колхозсенче те йӗркеллӗ пулса пыраҫҫӗ.

Г. ЗАХАРОВ.

Трактор бригадинче

СОВЕТСКИ. Механизаторсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче Г. Михайлов юлташ бригади малта пырать. Бригада ҫуракин малтанхи кунӗсенчен пуҫласах тухӑҫлӑ ӗҫлет.

Трактористсем тракторсене тата вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене вӑхӑтра, лайӑх пахалӑхпа юсаса пӗтернӗ. Ҫакӑ вӑл акара пӗр кӑлтӑксӑр ӗҫлеме тата ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗрмай ӳстерсе пыма пулӑшрӗ.

Трактористсем виҫӗ сменӑпа сухалаҫҫӗ. Ӗҫре чӑрмав ан пултӑр тесе, колхозниксем горючи, сӗрмелли ҫу таврашӗсене тата шыв вӑхӑтра илсе пыраҫҫӗ.

Механизаторсемпе колхозниксем, пӗр-пӗринпе туслӑ ӗҫлесе, мӗнпур ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн кӗрешеҫҫӗ. МТС-па тунӑ договор тӑрӑх, ҫураки вӑхӑтӗнчи ӗҫсен заданийӗсене трактор бригади Киров ячӗпе тӑракан колхозра тӑватӑ кун хушшинче пурнӑҫларӗ. Халӗ бригада «Восход» колхозра ӗҫлет.

Трактор бригади ҫураки вӑхӑтӗнче тумалли ӗҫсен планне пилӗк кун хушшинче ҫурри ытла тултарчӗ. Сехет графикӗпе ӗҫлесе, механизаторсем сменӑри ӗҫ нормисене тӑтӑшах ирттерсе тултараҫҫӗ. Л. Петров тракторист, «ДТ-54» тракторпа сухаласа, ӗҫ нормине 150 процентран кая тултармасть. М. Шаров тракторист та нормӑна унтан кая мар тултарса пырать. Механизаторсем горючипе сӗрмелли материалсене чылай перекетлеҫҫӗ.

Тракторсене вӑхӑтра тасатса ҫу сӗреҫҫӗ, ҫӗмӗрлесрен лайӑх асӑрхаса тӑраҫҫӗ.

Бригада ҫураки ӗҫӗсен планне кӗске вӑхӑтра, лайӑх пахалӑхпа тултарассишӗн кӗрешет.

Я. СИГАЙ.

Тымарҫимӗҫ акса тӑвассине хакламаҫҫӗ

ВӐРМАР. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх валли апат ҫителӗклӗ хатӗрлес пирки сӑмах хускатсан, ялхуҫалӑх пайӗн заведующийӗ Сапаркинпа главнӑй зоотехник Сергеева юлташсем тӳрех улӑх-ҫарансемпе кӗтӳ кӗтмелли вырӑнсем ҫителӗксӗрри ҫинчен, ҫавна пула выльӑх-чӗрлӗх йышӗпе унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерсе пыма кансӗрри ҫинчен калаҫма тытӑнаҫҫӗ. Кун пек сӑлтавсем шыраса ларнине ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗнче те курма пулать.

Улӑх-ҫарансемпе кӗтӳ ҫӳретмелли вырӑнсем ҫителӗксӗрри районти организацисем умне ответлӑ задачӑсем кӑларса тӑратать. Вӗсен кашни колхозрах тымарҫимӗҫ тата силос тумалли культурӑсем ытлӑн-ҫитлӗн акса тӑвассишӗн ҫине тӑрса кӗрешмелле.

Анчах районта тымарҫимӗҫпе силос тумалли культурӑсем акса тӑвас ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхаҫҫӗ. Кунта выльӑх апачӗ ҫителӗксӗр хатӗрлени, выльӑх-чӗрлӗх йышӗпе унӑн тухӑҫлӑхӗ вӑрахӑн ӳссе пыни ытлашши никамах та пӑшӑрхантармасть. Ӑна иртнӗ ҫул район выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултарманни те уҫҫӑн кӑтартса парать. Ҫакӑнтан район руководителӗсемпе колхоз председателӗсен тивӗҫлӗ выводсем тумаллаччӗ.

Район тымарҫимӗҫ, силос тумалли культурӑсем акас тӗлӗшпе кӑҫал та чӑтма ҫук юлса пырать. Майӑн 15-мӗшӗ тӗлне ҫав культурӑсем акмалли плана ҫурри те тултарман, 27 колхозран 13-шӗнче ку ӗҫе пачах та тытӑнман. Ҫакӑ вӑл чылай колхозсенче выльӑх апачӗ хатӗрлекен бригадӑсем организацилеменнинчен килет.

Ялхуҫалӑх пайӗн главнӑй зоотехникӗ Сергеева юлташ каланӑ тӑрӑх, выльӑх апачӗ хатӗрлекен бригадӑсем пилӗк колхозра ҫеҫ ҫук. Фактсем вара урӑххи ҫинчен калаҫҫӗ. Акӑ, «Авангард» колхоза илсе пӑхӑпӑр. Ялхуҫалӑх пайӗн сводки тӑрӑх, ку артельте выльӑх апачӗ хатӗрлекен бригада пур, вӑл ӗҫе тытӑннӑ курӑнать. Тӗрӗссипе илсен, ун пек бригада пачах организацилемен.

— Эпир пӗр ҫул ӳсекен курӑксемпе тымарҫимӗҫ акса тума уй-хир бригадисене хушатпӑр,— тет колхоз председателӗ Муллин юлташ.

Уй-хир бригадисем вара малтан тӗштырӑсем акаҫҫӗ, тымарҫимӗҫсене кайран тин акма шутлаҫҫӗ. Асӑннӑ колхоза килнӗ трактор бригади те тымарҫимӗҫ акма ҫӗр хатӗрлемест. Кунти участокра МТС-ӑн выльӑх апачӗ хатӗрлес енӗпе ӗҫлекен агрономӗ Малянов, зоотехник Егоров юлташсем пурӑнаҫҫӗ, анчах вӗсем «Авангард» колхоз тымарҫимӗҫ тата силос тумалли культурӑсем акманнипе килӗшсе лараҫҫӗ.

Тепӗр тӗслӗх. Чапаев ячӗпе тӑракан колхозри выльӑх апачӗ хатӗрлекен бригадӑра 87 ҫын шутланать. Тӗрӗслесе пӑхнӑ хыҫҫӑн вӗсенчен 35-шӗ хӑйсен ӗҫне туманни, бригадирсем вӗсене урӑх ӗҫсене яни палӑрчӗ.

Артель правленийӗ бригадӑна ҫирӗплетсе панӑ туртӑм тата ӗҫ вӑйӗсемпе хӑй мӗнле усӑ курас тет, ҫавӑн пек усӑ курать. Ҫуракин малтанхи кунӗсенче бригадӑри колхозниксем уй-хир бригадисенче ӗҫлерӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах выльӑх апачӗ тумалли бригадӑна ҫирӗплетсе панӑ 123 гектар ҫӗр ҫинче нимскерех те тӑваймарӗҫ. Бригадӑн пилӗк гектар тымарҫимӗҫ акса хӑварнипех ҫырлахма тиврӗ.

— Пӗр ҫул ӳсекеч курӑксемпе силос тумалли культурӑсене тӗштырӑсем акса пӗтернӗ хыҫҫӑн та акма ӗлкӗрӗпӗр-ха,— тесе лӑплантарать хӑйне хӑй выльӑх апачӗ хатӗрлекен бригадӑн бригадирӗ П. Яковлев юлташ.

«Победа», «Свобода», Сталин ячӗпе тӑракан, «Гвардеец», «Пионер» колхозсенче те тымарҫимӗҫ акас ӗҫе вӑраха тӑсаҫҫӗ.

Тымарҫимӗҫ тата силос тумалли культурӑсем акассине паянтан ырана хӑварса пыни районта обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫине ытла та тимсӗррӗн пӑхнине кӑтартса парать.

И. ВОЛКОВ,
(Хамӑр корр.).

Лайӑх ӗҫленӗшӗн—награда

ВӐРНАР. Каганович ячӗпе тӑракан колхозра П. Сидорова колхозница нумай ҫулсем хушши конюхра ӗҫлет. Вӑл хӑйне ҫирӗплетсе панӑ лашасене юратса пӑхать, вӑхӑтра апат парать, шӑварать, кашни кунах икшер хут тасатать.

Иртнӗ ҫура Сидорова юлташ хӑйне ҫирӗплетсе панӑ 11 кӗсререн 11 тиха илнӗ. Вӗсене пурне те лайӑх пӑхса ҫитӗнтерет. Лайӑх ӗҫленӗшӗн конюха Ялхуҫалӑх министерстви «Отличник сельского хозяйства» значокпа наградӑланӑ.

Е. ЗАХАРОВ.

АМЕРИКА ҪАР ҪЫННИСЕН ТИСКЕРЛӖХӖ

Кашни кунах Америка агрессорӗсем Корейӑра питӗ усал ӗҫсем туни ҫинчен ҫӗнӗ хыпарсем килсе тӑраҫҫӗ.

Америка интервенчӗсем икӗ ҫула яхӑн ӗнтӗ Корея ҫӗрӗ ҫинче иртӗнеҫҫӗ, унти ҫӗре мирлӗ ҫынсен юнӗпе хӗретеҫҫӗ. Америка захватчикӗсем преступлени хыҫҫӑн преступлени тӑваҫҫӗ, ҫав преступленисене малтанах шухӑшласа хурса тата сивӗ чунпа туса пыраҫҫӗ. Вӗсем напалм тултарнӑ бомбӑсем пӑрахса Корея халӑхӗн мирлӗ хулисемпе ялӗсене ҫунтарса яраҫҫӗ, ҫар ретӗнче тӑман граждансене персе пӑрахаҫҫӗ, хӗрарӑмсемпе ачасене вӗлереҫҫӗ. США-ри влаҫра тӑракан ушкӑнсем ҫынсене йышлӑн пӗтермелли чи усал хӗҫпӑшалпа—бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курма тытӑнчӗҫ, вӗсем тӗнчери право бактериллӗ хӗҫпӑшалпа вӑрҫӑра усӑ курма чарнине те, малта пыракан мӗнпур этемлӗх сивленине те шута хумарӗҫ.

Америка ҫарӗ гитлерла путьсӗрсен ҫулӗ ҫине, халӑх юнне юхтарса вӑрӑ-хурахла ӗҫсем тумалли ҫул ҫине тӑчӗ. Вӑл ҫынна ҫын вырӑнне хумалли йӗркесене пӗтӗмпех ура айне таптать, намӑса ҫухатса тата сӗмсӗрленсе пӗтӗм тӗнчери килӗшӳсене пӑсать, ҫав килӗшӳсем тӑрӑх тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене тата ҫартан тӑман ҫынсене ҫын вырӑнне хурса хисеплемелле.

Америка интервенчӗсем Корейӑра тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене питӗ тискеррӗн тыткалаҫҫӗ, ҫавӑн ҫинчен пӗлтернисене вуланӑ чухне чун тӑрӑхать. Американецсем Кочжедо утравӗ ҫинче тыткӑнри ҫар ҫыннисене усрамалли лагерь уҫнӑ, ҫав утрава Корейӑпа Китай халӑхӗсем «вилӗм утравӗ», тесе ят панӑ. Америка ҫарӗн мундирне тӑхӑннӑ палачсем тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене тискеррӗн асаплантараҫҫӗ, пусмӑрлаҫҫӗ тата нумайӑшне вӗлереҫҫӗ.

Америка ҫар ҫыннисем кӑҫалхи февральте Кочжедо утравӗ ҫинче Ҫурҫӗр Корея Халӑх ҫарӗн тата Китай халӑх добровольцӗсен ҫарӗн тыткӑна лекнӗ ҫыннисене вӗлерсе тискер ӗҫ тунине тӗнчери общественность манман-ха. Америкӑран пынӑ ҫынвӗлеренсем пулеметсенчен персе тата гранатӑсем ывӑтса тыткӑна лекнӗ хӗҫпӑшалсӑр ҫынсене вӗлерсе пӗтернӗ. Ун чухне тыткӑнри 200 ҫынна ытла вӗлернӗ тата амантнӑ. Март уйӑхӗнче каллех тыткӑнра пулнӑ вуншар ҫынна вӗлернӗ.

Америка интервенчӗсем, тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисем пирки Женевӑра тунӑ килӗшӗве сӗмсӗррӗн пӑсса, тӗнчери право нормисене те пӑсса, Корея Халӑх ҫарӗн тата Китай халӑх добровольцӗсен ҫарӗн салтакӗсене киле ямасӑр тытса чарма, гоминдан ушкӑнӗ аллине тата Корея халӑхне сутакан Ли Сын Ман шайкки аллине тытса пама хӑтланнӑ. Хӑйсен ирсӗр тата преступлениллӗ планӗсене пурнӑҫлас тесе, Америка агрессорӗсем тыткӑнри ҫынсенчен «уйрӑммӑн ыйтса пӗлнӗ», ун чухне, тыткӑнри ҫынсене хӑратса ӳкерес, тӑван ҫӗршывне сутакансем тӑвас, хӑйсен тӑван халӑхне хирӗҫ вӑрҫа хутшӑнтарас тесе, пусмӑрласа асаплантарнӑ.

Тыткӑнри ҫар ҫыннисен пурнӑҫӗ куллен-кун тӳсме ҫук йывӑрланса пынӑ. Америка командованийӗ тыткӑнри ҫынсен лагерӗсене асаплантармалли лагерьсем туса хунӑ, ҫынсене мӑшкӑласа асаплантарас тӗлӗшпе гитлерла фашистсенчен те иртсе кайнӑ.

Майӑн 7-мӗшӗнче Кӑнтӑр Корейӑри Кочжедо утравӗ ҫинче тыткӑнри ҫар ҫыннисем лагерьти тискерлӗхе хирӗҫ тарӑхса протестленӗ. Тыткӑнри ҫар ҫыннисем лагерь комендантне Америка генералне Додда тытса чарнӑ та чылай требованисем кӑларса тӑратнӑ. Вӗсем хӑйсене кӳрентернине тата асаплантарнине хирӗҫ, тыткӑнри ҫынсене вӑйпа пусмӑрласах юнпа петицисем ҫыртарнине хирӗҫ, юнаса хӑратнине, карцера хупнине, нумай ҫынсене вӗлернине, наркӑмӑшлӑ газсем янине, бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнине, атомлӑ бомбӑпа сӑнавсем тунине хирӗҫ протестленӗ. Вӗсем тыткӑнри ҫар ҫыннисене хӑйсен ирӗкӗпе тесе, чӑннипе илсен ирӗксӗрлесе урӑх ҫӗре янине чарса лартас, Ҫурҫӗр Корея Халӑх ҫарӗн тата Китай халӑх добровольцӗсен ҫарӗн тыткӑна лекнӗ ҫыннисене Америка захватчикӗсем енче ҫапӑҫма ирӗксӗрлесех суйласа илнине чарса лартас тесе протестленӗ.

Лагерӗн ҫӗнӗ коменданчӗ Колсон генерал, Додд генерал вырӑнне уйӑрса лартнӑскер, ирӗксӗрех тыткӑнри ҫар ҫыннисем ыйтни тӗрӗс пулать, тесе йышӑннӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: «...Юн юхтарнисем чӑнах пулнине эпӗ йышӑнатӑп. Пӗрлешнӗ нацисен ҫарӗсем тыткӑнри ҫар ҫыннисене нумайӑшне вӗлернӗ тата амантнӑ», тенӗ. Тыткӑнри ҫар ҫыннисене ирӗксӗрлесех суйласа илсе, вӗсене Америка интервенчӗсем тара тытнӑ ҫар ретне кӗртме хӑтланнине те Колсон йышӑннӑ. Вӑл «пусмӑрлани тата юн юхтарни малашне пулмалла мар тума» сӑмах панӑ. Колсон хӑй ҫине обязательствӑсем илсе ответ панӑ хыҫҫӑн, тыткӑнри ҫынсем Додд генерала ирӗке кӑларнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, Америка генералӗ Колсон тыткӑнри ҫынсене чӑнах питӗ тискеррӗн хӗсӗрленине, Ҫурҫӗр Корейӑран тата Китайран пӗлтернине пӗтӗм тӗнчене сарӑлнӑ хыпар тӗрӗс пулнине йышӑннӑ. Вӑл ҫакна йышӑннӑ: тыткӑнри ҫар ҫыннисене Америка уҫнӑ лагерьсенче асаплантараҫҫӗ тата пусмӑрлаҫҫӗ, унти йӗркесем—гитлерла вилӗм лагерӗсенче пулнӑ йӗркесем пекех.

Америка тыткӑнри ҫар ҫыннисене усрама уҫнӑ лагерь коменданчӗ ҫавӑн пек калани ҫинчен пӗлсен, США-ри влаҫра тӑракан ушкӑнсем аптӑраса ӳкнӗ. Америкӑн ҫар ҫыннисем хӑйсем тунӑ преступленисене пытарма хӑтланаҫҫӗ. Колсон генерала вырӑнтан кӑларнӑ. ООН хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем тесе суя ят панӑ ҫарӑн—Корейӑри ҫарӑн главнокомандующийӗ Кларк генерал, Америкӑри хаҫатсен Токиори корреспонденчӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Колсон генерал тыткӑнри ҫар ҫыннисемпе тунӑ «килӗшӳ условийӗсене» йышӑнман. Ҫапла Кларк генерал ултавлӑ ӗҫ тунӑ.

Америка интервенчӗсем Кочжедо утравӗ ҫинче питӗ тискер ӗҫ туни Америка империалисчӗсем мӗнле ҫулпа пынине пӗтӗм тӗнчене кӑтартса пачӗ. Пӗрлешнӗ нацисен организацийӗн ялавӗпе витӗнсе, Америка захватчикӗсем тӗнчери право нормисемпе тӗнчери килӗшӳсене пире валли туман, тесе шутлаҫҫӗ. Вӗсем пӗтӗм этемлӗхшӗн кирлӗ законсене йышӑнмаҫҫӗ, вӗсем пӗр закона ҫеҫ—вӑрӑ-хурахсен законне, гитлерла ҫарату законне ҫеҫ йышӑнаҫҫӗ.

Америка пропагандисчӗсем Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче демократи пур тесе сӳпӗлтетни кама улталайрӗ-ши? Америкӑри миллионерсемпе миллиардерсен демократийӗ, чӑннипе илсен, ҫакӑн пек: Америка интервенчӗсем Корейӑра тискер преступленисем тӑваҫҫӗ, тыткӑнри ҫар ҫыннисене палачла тыткалаҫҫӗ, мирлӗ халӑха бактериллӗ хӗҫпӑшалпа пӗтереҫҫӗ.

Америка агрессорӗсем Корейӑра питӗ тискер преступленисем туни Америкӑри политикансем икӗ питлӗ ҫынсем пулнине тӑрӑ шыв ҫине кӑларать. Вӗсем сӑмахпа «этеме хисеплесси» ҫинчен тата «демократиллӗ принципсем» ҫинчен калаҫаҫҫӗ, ӗҫре вара—фашистла пусмӑрлӑх йӗрки туса пыраҫҫӗ. Корейӑра питӗ тискер преступленисем туни тата США-па пӗрле Корея тата Китай халӑхӗсене хирӗҫ юнлӑ интервенцие хутшӑннисен икӗпитлӗхне тӑрӑ шыв ҫине кӑларать. Вӗсем, США-ри влаҫра тӑракан ушкӑнсемпе пӗрле, Пӗрлешнӗ нацисен организацийӗн ялавне, этемлӗхе хирӗҫ тунӑ преступленисене ҫав ялавпа витсе, намӑслантараҫҫӗ.

Америка ҫарӗнчи ҫынсем Кочжедо утравӗ ҫинче тыткӑнри ҫынсен юнне юхтарса тискер ӗҫ тунине пытарма темӗн чухлӗ хӑтлансан та, ҫав преступленисемшӗн хӑйсем ответлӑ пулнине сирсе пӑрахаймӗҫ. Мира юратакан халӑхсем Америка агрессорӗсене—мирпе демократи тӑшманӗсене чунтан курайманни ӳссех пырать.

(«ПРАВДА», 1952 ҫулхи майӑн 16-мӗшӗнчи умстатьи).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Йышӑннӑ обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫламалла

Ҫак кунсенче Шупашкарти пир-авӑр комбинатӗнчи коммунистсен пӗрлехи пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху «1952 ҫулхи строительствӑпа монтаж планне ӑнӑҫлӑн тултарас тӗлӗшпе йышӑннӑ социализмлӑ обязательствӑна мӗнле пурнӑҫласа пыни тата парторганизаци умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен» сӳтсе яврӗ.

— Кӑҫал пир-авӑр комбиначӗн коллективӗ умӗнче пысӑк та ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Пӗр ҫулталӑк хушшинче иртнӗ тӑватӑ ҫул хушшинче тунӑ ӗҫсенчен пӗрре ҫурӑ хут ытларах тумалла,— тет докладчик, 11-мӗш трест управляющийӗ А. Каплин юлташ.— Умра тӑракан задачӑсене чыслӑн пурнӑҫлас тесе, строительсем кӑҫалхи февраль уйӑхӗнче социализмлӑ обязательство йышӑннӑ. Вӗсем ҫулталӑкри плана декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне тултарма, пир-авӑр тӗртекен фабрика ҫуртне август уйӑхӗ тӗлне 400 станок вырнаҫтарса лартмалӑх, 22 пин ытла ҫип арлакан йӗке вырнаҫтарса ӗҫе яма, пурӑнмалли ҫуртсем, ача яслипе сачӗ срокчен туса лартма, ялхуҫалӑх институчӗн ҫуртне август уйӑхӗ тӗлне туса пӗтерме, строительство пахалӑхне лайӑхлатма, унӑн хакне йӳнетме, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме сӑмах панӑ.

Илнӗ обязательствӑна пурнӑҫласа, строительсем пӗрремӗш кварталта ҫип арлакан оборудование вырнаҫтарса лартса ӗҫе ямалли плана тултарнӑ, ку ӗҫ иккӗмӗш кварталта та ӑнӑҫлӑн пырать. Пурӑнмалли ҫуртсемпе ялхуҫалӑх институчӗн ҫуртне тӑвас ӗҫсем те сарӑлса пыраҫҫӗ.

ВКП(б) обкомӗн IX-мӗш пленумӗпе Шупашкар хула комитечӗн VII-мӗш пленумӗ пир-авӑр комбинатне тӑвас ӗҫ ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхпа пынине палӑртнӑччӗ. Ҫакӑнтан партбюро тивӗҫлӗ вывод туман, парторганизацие тата коллектива умра тӑракан задачӑсене, йышӑннӑ обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫлама большевикла мобилизацилемен. Комбинатра пурӗ 120 коммунист, 230 комсомолец ӗҫлет. Коллективра стахановла ӗҫлекен, пур ӗҫе те пысӑк пахалӑхпа туса пыракан бригадӑсем нумай. 126 рабочие стахановец ятне панӑ. Ҫав вӑхӑтрах чылай рабочисем ӗҫ нормине тултараймаҫҫӗ. Трест ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана 78 процент ҫеҫ тултарнӑ. Кӑҫалхи тӑватӑ уйӑх хушшинче строительствӑпа монтаж ӗҫӗсем планпа палӑртнинчен 3,7 миллион тенкӗлӗх сахалтарах тунӑ.

Ҫакӑ вӑл ӗҫе япӑх йӗркеленинчен, участоксен начальникӗсем, прорабсем, мастерсем чылайӑшӗ ответлӑх туйманнинчен, социализмлӑ ӑмӑртӑва большевикла организацилеменнинчен, малта пыракансен опытне пӗтӗҫтерсе сарманнинчен килет. Рабочисене нарядсем вӑхӑтра памаҫҫӗ, график тӑрӑх ӗҫлесси йӑлана кӗмен.

Строительствӑра механизмсем нумай. Вӗсемпе туллин усӑ курасси кадрсенчен килет. Трест руководителӗсем, ҫавӑн пекех партбюро ӑста рабочисем вӗрентсе хатӗрлеме тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ. Ҫакӑнта калани тӗрӗссине кӑтартма пӗр тӗслӗх те ҫителӗклӗ. Кӑҫал пурӗ 90 пин кубометр ытла ҫӗр чавса купаламалла. Кӗреҫепе ӗҫлес пулсан, мӗн чухлӗ рабочи кирлӗ пулнӑ пулӗччӗ. Трестӑн экскаватор, канав чавакан машина, бульдозер пур. Вӗсем пӗри те йӗркеллӗ ӗҫлемеҫҫӗ-ха.

* * *

— Участок руководителӗсем хушнипе растворомешалкӑна пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна тӑватӑ хут куҫарса лартрӑмӑр. Апла пулин те унпа усӑ курмарӗҫ. Подъемника вырӑнтан куҫарса лартма хушрӗҫ. Икӗ кун иртсен каллех хӑйӗн ӗлӗкхи вырӑнне лартма сӗнчӗҫ. Растворонасоссене темиҫе хут та вырнаҫтарса лартрӑмӑр, ҫапах вӗсене ӗҫлеттермеҫҫӗ,— тет Захаркин юлташ.

Мигушин, Якимов тата Никитин юлташсем материалсем вӑхӑтра кӳрсе килменшӗн, малашлӑха курса ӗҫлеменшӗн снабжени пайне хытӑ критиклерӗҫ. Пӗрене вӑхӑтра кӳрсе килменнипе йывӑҫ ҫуртсем, алӑк, чӳрече рамисем тӑвас ӗҫ юлса пырать. Производствӑпа техника пайӗнче ӗҫлекен инженерсемпе техниксем участоксене ҫителӗклӗ пулӑшмаҫҫӗ, наукӑпа техникӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсемпе усӑ курма, малта пыракансен опычӗпе меслетне сарма тӑрӑшмаҫҫӗ.

Комбинат дирекцийӗ строительсене кирлӗ пек пулӑшу памасть. Вӑл хӑшпӗр техникӑллӑ документсене вӑхӑтра хатӗрлесе памасть. Кӑҫал ҫӑкӑр завочӗ лартмалла. Анчах ун валли халиччен те проект хатӗрлемен, вырӑн уйӑрман.

Строительсем ответлӑ тапхӑра кӗчӗҫ. Хӑшӑ ҫанталӑк ҫӗр чавса купалас, бетонпа кирпӗч хывас ӗҫсене хӑвӑртлатма май парать. Атӑл ҫинче навигаци пуҫланӑранпа материалсем кӳрсе килесси лайӑхланнӑ. Трестӑн плана тултарма ҫеҫ мар, иртнӗ уйӑхсенчи парӑма татмалӑх та майсем пур. Илнӗ обязательствӑна чыслӑ пурнӑҫласси строительсем хушшинче партиллӗ-политикӑллӑ тата партиллӗ-массӑллӑ ӗҫе ҫӳлӗ пусӑма хӑпартнинчен, социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑ сарнинчен, коммунистсен производствӑри рольне ӳстерсе пынинчен, критикӑпа самокритикӑна вӑйлатнинчен килет. Парторганизацин администраци ӗҫне тӗрӗслесе тӑрассине вӑйлатмалла, коллектива ӗҫре тӗл пулакан ҫитменлӗхсемпе чӑрмавсене вӑхӑтра пӗтерсе пыма мобилизацилемелле. Партбюрон цехсемпе участоксенчи парторганизацисен пуҫарулӑхӗпе пултарулӑхне ӳстерсе пымалла, комсомол организацине комсомолецсемпе ҫамрӑксене большевикла воспитани пама ытларах пулӑшмалла, профсоюз организацийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑва ертсе пырас ӗҫри формализма хӑвӑртрах пӗтермелле.

Пухура ВКП(б) обкомӗн секретарӗ Т. Ахазов юлташ тухса каларӗ. Вӑл строительствӑри пысӑк ҫитменлӗхсене палӑртрӗ, коммунистсене умра тӑракан задачӑсене чыслӑн пурнӑҫласа пыма чӗнсе каларӗ. Пуху ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме коллектива 1952 ҫулхи плана тултарма мобилизацилекен решени йышӑнчӗ.

Д. ДУБИНИН.

Парти райкомӗ профсоюз ӗҫне ертсе пыни

Совет профсоюзӗсем хӑйсен пӗтӗм ӗҫне коммунистсен партийӗ ертсе пынипе туса пыраҫҫӗ. Парти ертсе пыни профсоюзсене иксӗлми вӑй-хӑват паракан ҫӑлкуҫӗ пулса тӑрать. Ҫавна пулах ӗнтӗ профсоюзсен авторитечӗ ӗҫҫыннисем хушшинче куллен ӳссе пырать.

Пирӗн партин аслӑ ҫулпуҫӗсем Ленинпа Сталин ҫапла вӗрентеҫҫӗ: обществӑллӑ организацисен ӗҫ формисемпе меслечӗсене ку чухнехи конкретлӑ обстановкӑри уйрӑмлӑхсем тата ҫав обстановкӑран тухса тӑракан татӑклӑ задачӑсем кӑтартса параҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра, пирӗн ҫӗршыв социализмран коммунизма куҫса пынӑ вӑхӑтра, профсоюзсен пӗтӗм ӗҫӗ тата вӗсен организациллӗ ӗҫӗн меслечӗсемпе формисем пӗтӗмпех коммунизм тӑвас задачӑна пӑхӑнса тӑмалла. Профсоюзсем,— тенӗ Ленин,— коммунизм шкулӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Ӗҫҫыннисене коммунизмлӑ воспитани парас ӗҫре профсоюз организацийӗсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Профсоюз организацийӗсен, парти ертсе пынипе, ӗҫҫыннисене совет патриотизмӗ майлӑ воспитани памалла, хамӑр Тӑван ҫӗршыва, Ленин—Сталин партине вӗҫӗ-хӗррисӗр парӑнса ӗҫлеме хавхалантарса пымалла, ӗҫҫыннисен ӑс-тӑнӗнчи капитализм юлашкисене пӗтерессишӗн, буржуаллӑ идеологи палӑрӑмӗсене ҫӗмӗрсе тӑкассишӗн кӗрешме мобилизацилемелле.

Юлашки вӑхӑтра ВКП(б) Сӗнтӗр райкомӗ профсоюз организацийӗсен ӗҫӗпе ытларах интересленме пуҫларӗ. Районта 22 профсоюз организацийӗ. ВКП(б) райкомӗ профсоюз организацийӗсен ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе тӗрлӗ майсемпе усӑ курать.

Кӑҫал ВКП(б) райкомӗ профсоюз райкомӗсемпе местком председателӗсен икӗ семинарне ирттерчӗ. Семинарсенче профсоюз организацийӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем, ӗҫҫыннисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатасси, профсоюз демократине ҫирӗп пурнӑҫласа пырасси тата ытти ыйтусем ҫинчен сӳтсе явнӑ. Кунсӑр пуҫне профсоюз кадрӗсемпе икӗ канашлу ирттернӗ. ВКП(б) райкомӗн бюровӗнче виҫӗ организацин ӗҫӗсем ҫинчен сӳтсе явнӑ.

Сӗнтӗрти пир-авӑр фабрикинчи профсоюз комитечӗн отчетне бюрора итленӗ хыҫҫӑн, фабрикӑри профсоюз организацийӗ массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе чылай лайӑхлатрӗ. Ку организацире профсоюз членӗсем 124 ҫын, вӗсен политикӑллӑ тата производствӑллӑ активлӑхӗ ӳссе пырать. Фабком производствӑллӑ, культурӑллӑ-массӑллӑ, пурнӑҫпа йӑла, ӗҫе сыхлас, социальнӑй страховани тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссисем тунӑ. Ҫакӑ вӑл фабком активпа тачӑрах ҫыхӑну тытма, хӑйӗн пӗтӗм ӗҫне актив ҫине таянса туса пыма тытӑннине кӑтартса парать.

Фабрикӑра ӗҫлекенсем пурте социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ. Лайӑх пахалӑхпа ӗҫлекен бригадӑсем йӗркеленӗ. Ткачихӑсем кашни уйӑхрах социализмлӑ обязательствӑсем илеҫҫӗ, уйӑх вӗҫӗнче вара ӑмӑрту итогӗсене производствӑллӑ канашлусенче сӳтсе яваҫҫӗ. Профсоюз членӗсен пухӑвӗсем те вӑхӑтра пулса пыраҫҫӗ. Партипе профсоюз организацийӗсем политикӑллӑ тата организациллӗ ӗҫсене вӑйлатнипе фабрика коллективӗ социализмлӑ ӑмӑртура пысӑк ӳсӗмсем тӑвать. Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртура фабрика коллективӗ апрельти производство планне 5 кун малтан 102 процент тултарчӗ.

Сӗнтӗр вӑрманпромхозӗнчи профсоюз организацийӗ (рабочком председателӗ Белов юлташ) хӑйӗн ӗҫне япӑх туса пынӑ. ВКП(б) райкомӗ ку организацин пӗтӗм ӗҫне тӗплӗн тишкерсе тухрӗ. ВКП(б) райкомӗн парти, комсомол тата профсоюз организацийӗсен пайӗ профсоюз комитечӗн ӗҫне тӗрӗсленипе пӗрлех, ӑна организациллӗ-массӑллӑ ӗҫе лайӑхлатма вырӑнта практикӑллӑ пулӑшу пачӗ.

Тӗплӗн тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, рабочком отчетне ВКП(б) райкомӗн бюровӗнче сӳтсе явнӑ. Бюро вӑрманпромхозри профсоюз организацийӗн ӗҫне лайӑхлатмалли майсене кӑтартса пачӗ. Райком решенийӗсене пурнӑҫласа, профсоюз организацийӗ хӑйӗн ретне ӳстерес тӗлӗшпе лайӑхрах ӗҫлеме пуҫларӗ. Кӑҫал 10 ҫынна профсоюз членне илнӗ. Рабочисен йӑла условийӗсем ҫителӗклӗ пулман. Хальхи вӑхӑтра пурӑнмалли хваттерсене юсанӑ, хӗрлӗ кӗтес организациленӗ. Рабочисемпе служащисем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе чылай вӑйлатнӑ.

Медицина работникӗсен профсоюз райкомӗ, финанспа банк работникӗсен профсоюз райкомӗ хӑйсен ӗҫне лайӑхлатса пыраҫҫӗ. Анчах, пӗтӗмӗшпе илсен, районта профсоюз организацийӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Ҫак кунсенче ВКП(б) райкомӗн бюровӗ потребкооперации работникӗсен профсоюз райкомӗн председателӗн Янушкин юлташӑн отчетне сӳтсе яврӗ. Унччен малтан ВКП(б) райкомӗ профсоюз организацийӗн ӗҫне тӗплӗн тишкерсе тухрӗ. Профсоюз райкомӗ месткомсене ертсе пымасть. Месткомсем профсоюз членӗсен пухӑвӗсене хутран-ситрен кӑна ирттереҫҫӗ. Сӑмахран, Калайкасси пе Сӗнтӗр ялповӗсенчи месткомсенче кӑҫал пӗр пуху та ирттермен.

Районти суту-илӳ организацийӗсенче ӗҫлекенсенчен 14 проценчӗ профсоюз членӗнче тӑмасть. 1952 ҫулхи пӗррремӗш кварталта член укҫи пухмалли плана 63 процент кӑна тултарнӑ. Профсоюз райкомӗ социализмлӑ ӑмӑртӑва начар ертсе пырать. Ахальтен мар ӗнтӗ райпотребсоюз 1952 ҫулхи пӗррремӗш кварталти таварҫаврӑнӑш планне 87 процент ҫеҫ тултарчӗ. Суту-илӳ работникӗсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе ҫителӗклӗ туса пымаҫҫӗ.

МТС-ри рабочисен профсоюз комитечӗн председателӗ Пальцев юлташ профсоюз ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе кирлӗ пек тӑрӑшмасть. Механизаторсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне начар ертсе пырать. Лайӑх ӗҫлекен трактористсен, сӑмахран, Ерцев, Ильлуганов тата Тимакова юлташсен опытне сарса пымаҫҫӗ. Ҫак трактористсем сменӑри нормӑсене ирттерсе тултараҫҫӗ. Ерцев юлташ культиваци тумалли плана майӑн 10-мӗшӗ тӗлне 120 процент тултарнӑ. Ҫак паха опытсене МТС-ри пур бригадӑсенче те ӑнлантарса парассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫавна пулах ӗнтӗ механизаторсенчен чылайӑшӗ сменӑри нормӑна тултармаҫҫӗ. Сӑмахран, Питирнов юлташ ертсе пыракан бригадӑри трактористсем ӗҫ нормине тата ӗҫ планӗсене тултарса пыраймаҫҫӗ. МТС-ри парторганизаци те (секретарӗ И. Карабаев юлташ) профсоюз ӗҫне кирлӗ пек ертсе пымасть.

Кӑҫал февраль уйӑхӗнче пулса иртнӗ профсоюз активӗн районти пухӑвӗнче ВЦСПС-ӑн VII пленумӗн итогӗсене сӳтсе явнӑ. Ҫак пухура критикӑпа самокритикӑна анлӑн сарса, профсоюз организацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене палӑртнипе пӗрлех, ВКП(б) райкомӗн парти, комсомол тата профсоюз организацисен пайӗ профсоюз комитечӗсене ҫителӗксӗр ертсе пынине палӑртнӑ. ВКП(б) райкомӗ актив пухӑвӗнче палӑртнӑ сӗнӳсене шута илмесӗр тӑма пултарайман. Ҫакӑн хыҫҫӑн ВКП(б) райкомӗ профсоюз организацийӗсен ӗҫне вӑйлатас тӗлӗшпе мӗн-мӗн тумаллине палӑртрӗ. Парти райкомӗ, профсоюз ыйтӑвӗсем ҫинчен хӑйӗн бюровӗнче тӑтӑшрах сӳтсе явса палӑрнӑ ҫитменлӗхсене пӗтерессишӗн тӑрӑшать.

Профсоюз организацисен чи пысӑк ҫитменлӗхӗ вӑл — организациллӗ-массӑллӑ ӗҫе кирлӗ пек туса пыманни. Предприятисемпе учрежденисенче, промысла артелӗсенче хӑшпӗр рабочисемпе служащисем профсоюз членӗнче тӑмаҫҫӗ, уйрӑм профсоюз членӗсем устава пӑсаҫҫӗ— член укҫи вӑхӑтра тӳлемеҫҫӗ. ВКП(б) райкомӗ ҫак ыйтусемпе те ытларах интересленме тытӑнчӗ. Парти райкомӗ пуҫламӑш парторганизацисене профсоюз организацийӗсен ӗҫне куллен ертсе пыма, профсоюз комитечӗсене вӑхӑтра тата тивӗҫлӗ пулӑшу пама кирлине астутарса тӑрать.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) Сӗнтӗр райкомӗн секретарӗ.

Комсомол ӗҫӗ ҫинчен

ВКП(б) Канаш хула комитечӗ комсомол организацийӗсен ӗҫне мӗнле ертсе пыни ҫинчен Канашри вагонсем юсакан заводри партбюро секретарӗ Колокольнев юлташӑн докладне итлерӗ.

Заводри ВЛКСМ комитечӗ цехсенчи комсомол организацисене ҫирӗплетессишӗн, вӗсен политикӑллӑ вӗренӗвне йӗркелессишӗн ҫителӗксӗр тӑрӑшать, ҫамрӑксем хушшинче культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе кирлӗ пек туса пымасть.

Заводри комсомолецсен пӗрлехи пухӑвӗсем те сайра хутра ҫеҫ пулаҫҫӗ. Сӑмахран, кӑҫал мӗн пурӗ те пӗр пуху кӑна ирттернӗ.

Заводри партбюро тата цехсенчи парторганизацисем комсомол ӗҫӗпе куллен интересленмеҫҫӗ. ВЛКСМ хула комитечӗ те заводри организацие ҫителӗксӗр пулӑшать.

ВКП(б) хула комитечӗн бюровӗ заводри комсомол организацийӗн ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтерме, комсомол ӗҫне лайӑхлатма тивӗҫлӗ решенисем йышӑнчӗ.



Шупашкар районӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхозӑн 3-мӗш уй-хир бригадинче И. Александровпа С. Туйманцев юлташсем сеялкӑпа тырӑ акаҫҫӗ, кулленхи нормӑна 110—120 процент тултарса пыраҫҫӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: И. Александровпа С. Туйманцев юлташсем сеялка ещӗкне вӑрлӑх тултараҫҫӗ.

А. КОСТИН фотоӳкерчӗкӗ.

Пулӑшу касси

ЕТӖРНЕ. Ильич ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артель членӗсем иртнӗ ҫул пулӑшу касси организацилерӗҫ. Унта 140 колхозник члента тӑрать. Кассӑри укҫа 2.500 тенке ҫитрӗ тата 500 пӑта яхӑн тырӑ пур.

Пулӑшу касси Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене тата нумай ача амӑшӗсемпе ватӑ пирки ӗҫлеймен пулнӑ колхозниксене пулӑшать. Кӑҫал Л. Исаевӑпа А. Долгов колхозниксене ӗне илме тырӑ парса пулӑшнӑ. Ҫавӑн пекех Н. Анисимовӑпа В. Кузьмина колхозницӑсене ҫӗнӗ пӳртсем лартса панӑ, Д. Исаевӑпа Ф. Васильев юлташсене ҫуртсене юсама пулӑшнӑ.

Колхозри пулӑшу касси мӗнле ӗҫлени ҫинчен райсовет исполкомӗн тата ял Советӗн ларӑвӗсенче час-часах сӳтсе яваҫҫӗ, ӗҫе тӗрӗс йӗркелеме пулӑшаҫҫӗ.

Е. ФЕДОТОВ.

Пирӗн кӳршӗсем

Тӑвай районӗнчи «Сталь» колхозри художествӑллӑ пултарулӑх коллективне пирӗн Тутар республикинчи чӑваш ялӗсенчи ӗҫҫыннисем те лайӑх пӗлеҫҫӗ. Коллектив кӑҫал пирӗн пата темиҫе хутчен килсе чӑвашла спектакльсем, концертсем кӑтартрӗ.

Иртнӗ кунсенче вӗсем «Савнӑ тусӑм, хура куҫӑм», «Ҫурхи кӗвӗсем», «Шурӑ кӑвакарчӑн», «Сирень аллейи» пьесӑсене килсе лартса пачӗҫ. Куракансем коллектив членӗсене ӑшшӑн кӗтсе илчӗҫ, малашне те тӑтӑшах постановкӑсемпе концертсем килсе кӑтартма ыйтрӗҫ.

Чӑваш ялӗнчи художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗ пирӗн пата килни пире, Тутар республикинчи чӑвашсене, савӑнтарать. Эпир хамӑр халӑхӑн культури ӳссе пынине курса савӑнатпӑр, республика ӳсӗмӗсемпе паллаштарӑр.

А. КУЗНЕЦОВ.

Тутар республикинчи Подберезински районӗнчи Терпӳрт ялӗ.

Мир сачӗ

КӲКЕҪ. Патирекри Ильич ячӗпе тӑракан колхозра иртнӗ кӗркунне 10 гектар ҫӗр ҫине улмуҫҫисемпе чие ҫырли йывӑҫҫисем лартса ҫӗнӗ сад тунӑ. Ҫак сада колхозниксем Мир сачӗ тесе ят панӑ. Мир садне ҫитес ҫулсенче 50 гектара ҫити пысӑклатма палӑртнӑ.

Кӑҫал ҫуркунне сада виҫӗ гектар пысӑклатаҫҫӗ. Халӗ хӑмла ҫырли йывӑҫҫи 2.800 тӗп лартнӑ. Сада лартмалли йывӑҫсене вырӑнтах ҫитӗнтерме колхозра питомник тунӑ. Унта 1,000 тӑваткал метр ҫине китайка вӑрри акнӑ.

Ҫамрӑк сада тата уй-хире хӳтӗлеме йывӑҫ нумай лартаҫҫӗ. Ҫак кунсенче 19 пин ҫӑка, 2 пин вӗрене лартнӑ. Йывӑҫсем лартас ӗҫе колхоз садовочӗ Петр Яковлев юлташ ертсе пырать.

Картинӑсен выставки

Патӑръелӗнчи педагогика училищинче вӗренекенсене паллӑ художниксен ӗҫӗсемпе паллаштарас майпа картинӑсен выставки тунӑ. Унта вырӑс художникӗсемпе совет художникӗсен паллӑ ӗҫӗсем нумай. Репин, Н. А. Римский-Корсаков, Л. Н. Толстой, М. П. Мусоргский тата В. Стасов портречӗсем, В. И. Суриковӑн паллӑ картини—«Суворов Альп сӑрчӗ урлӑ каҫни» тата ытти картинӑсем те нумай. Кунсӑр пуҫне выставкӑра «Живопись», «Скульптура» тата «Пейзаж» витринӑсем пур.

Кашни ҫулах педагогика училищинче нагляднӑй пособисен шутне ӳстерме конкурс ирттереҫҫӗ. Кӑҫал конкурса 28 студент хутшӑнчӗ. М. Волков ӳкернӗ «Аслатиллӗ ҫумӑр килет», В. Кузнецовӑн—«Виҫӗ паттӑр» ӳкерчӗкӗсем училищӗре 1-мӗш премие, А. Блиновӑн Некрасов портречӗ 2-мӗш премие илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Халӗ конкурса тӑратнӑ нагляднӑй пособисене картинӑсен выставкине вырнаҫтарнӑ.

И. МАТРОСОВ.

СУЛСЕНЕ ЮСАҪҪӖ

КАЛИНИНО. Районти колхозсем сулсене тӳрлетсе якатма тытӑнчӗҫ. Калинино сывӑхӗнчи сулсене юсанӑ. Районта сулсем ҫӗррине чылай йывӑҫ лартрӗҫ. Сулӗсене юсасси вӑйланса пырать.

И. ПРОКОПЬЕВ.

Тракторсемпе тухӑҫлӑ ӗҫлеме мӗн чӑрмантарать

МУРКАШ. Колхозсемпе тунӑ договорсем тӑрӑх, МТС-ӑн кӑҫалхи ҫуракинче пӗтӗмпе 5.035 гектар тухӑҫлӑ чухлӗ ӗҫ тумалла. Мӗнпур тракторсене туллин усӑ курсан тата вӗсене икшер сменӑпа ӗҫлеттерсен, ҫавӑн чухлӗ ӗҫе 12 кун хушшинче вӗҫлеме пулать. Анчах малтанхи вунӑ кун хушшинче ҫуракинче тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне МТС 55,7 процент кӑна тултарма пултарчӗ.

Тракторсемпе тухӑҫсӑр ӗҫлени мӗнрен килет-ха? Пӗтӗмӗшпе илсен, Муркаш машина-трактор станцийӗ ҫӗнӗ техникӑпа хӗҫпӑшаллантарнӑ. Унӑн кадрсем те ҫителӗклӗ, кашни трактор пуҫне икшер тракторист тивет. Ҫапла вара, сӑлтавӗ пачах урӑххинче. Тракторсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗчӗкки, чи малтан, трактористсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе тивӗҫлипе туса пыманнинчен, механизаторсен ӑмӑртӑвне начар ертсе пынинчен килет.

Кӑҫалхи февраль уйӑхӗнче хамӑр республикӑри чи лайӑх ӗҫлекен механизаторсен патриотла чӗнӗвне сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн МТС-ри уйрӑм трактористсем тракторсене тухӑҫлӑ ӗҫлеттерес, ҫӗрӗҫ культурине ӳстерес тата колхозсенче вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе татӑклӑ обязательствӑсем илчӗҫ. Анчах ҫак пархатарлӑ ӗҫ хӑйӗн пуҫламӑшӗнчех пӑчланса ларнӑ. Пуҫламӑш парторганизаципе МТС дирекцийӗ ытти трактористсене кашнине уйрӑм обязательствӑсем илме нимӗнле пулӑшу та паман, вӗсенчен чылайӑшне ӑмӑртӑва хутшӑнтарман.

Машина-трактор станцийӗн ӗҫӗнчи ӑнӑҫлӑх пуринчен ытла трактористсем мӗнле ӗҫленинчен килет. Ҫавӑнпа та кашни трактористпа уйрӑммӑн ӗҫлени, кашни трактористa куллен-кун воспитани парса пыни кирлӗ. Ҫакна парторганизаци манӑҫа хӑварать. Трактор бригадисенче политикӑллӑ калаҫусем сайра-хутра кӑна пулаҫҫӗ, трактористсенчен заданисене кам мӗн чухлӗ пурнӑҫласа пынине ниҫта та палӑртмаҫҫӗ.

Пуҫламӑш парторганизацин ҫураки вӑхӑтӗнче ирттермелли политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫ планӗ тӑрӑх агитаторсемпе виҫӗ хутчен семинарсем ирттермелле, «Пирӗн МТС 1952 ҫулта мӗнле ӳсӗмшӗн кӗрешет» темӑпа витрина, ӑмӑртура мала тухакан трактор бригадине пама куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялав, бригадӑсенче чи лайӑх трактористa пама хӗрлӗ флажоксем тума, ҫураки вӑхӑтӗнче трактор бригадисенче кашни виҫӗ кунта пӗрре боевой листоксем кӑларса тӑма палӑртнӑ. Халӗ вара ҫак ӗҫсенчен пӗри те пурнӑҫланса пымасть.

Социализмлӑ ӑмӑртӑва кунтан-кун вӑйлатса пырас тесен, малта пыракан механизаторсен паха опычӗсене анлӑ сарни, коммунистсемпе комсомолецсен авангардлӑ рольне тӑтӑшах ӳстерсе пыни кирлӗ. Хальхи вӑхӑтра трактор бригадисем хушшинче пыракан ӑмӑртура Г. Егоров коммунист ертсе пыракан трактор бригади малта пырать. Вӑл ҫуракинче тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне вунӑ кун хушшинче 73,1 процент таран пурнӑҫланӑ. Ҫапах та ҫак бригадӑри механизаторсен ячӗсене ырӑпа та палӑртмаҫҫӗ. Ҫуракине тухнӑранпа МТС-ра стена хаҫачӗ пӗрре те тухман.

Ф. Семенов коммунист ертсе пыракан трактор бригади иртнӗ ҫулта пуринчен те начар ӗҫленӗ, ҫулталӑкри производство заданине пурнӑҫламан. Ҫакӑншӑн Семенов юлташа парти пухӑвӗсенче те, производствӑллӑ канашлусенче те хытӑ критикленӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вӑл иртнӗ ҫулхи ҫитменлӗхсене пӗтерме, кӑҫал ӑмӑртура малти ретре пыма пулнӑ. Анчах вӑл хӑйӗн сӑмахне ӗҫпе ҫирӗплетмест. Унӑн бригади кӑҫал та япӑх ӗҫлет, ҫуракинче кая юлса пырать, агротехникӑна хытӑ пӑсать.

Парторганизаци Ф. Семенов юлташа хӑйӗн бригадинче агитатор пулса ӗҫлеме ҫирӗплетнӗ. Анчах вӑл трактористсем хушшинче нимӗнле политикӑллӑ ӗҫ те ирттермест. Бригадӑри механизаторсене пурне те тухӑҫлӑ ӗҫлеме вӗрентес, вӗсене малта пыракан трактористсемпе танлаштарма пулӑшас вырӑнне час-часах ӳсӗр ҫӳрет. Ҫуракине тухсан малтанхи кунсенчех ҫак бригадӑн отчетне парти пухӑвӗнче итлесе унӑн ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑннӑ пулсан, паллах, ҫавӑн пек пулман пулӗччӗ. Парторганизаци контроль правипе начар усӑ курать, унӑн МТС директорӗн те трактор бригадисен бригадирӗсен отчечӗсене итлес йӑла пачах ҫук. Ҫавӑн пекех парти пухӑвӗсенче механизаторсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне ертсе пырас ӗҫпе ҫыхӑнса тӑракан ыйтусем ҫинчен те ку таранччен пӗрре те сӳтсе явман. Парторганизаци МТС коллективӗ тата трактор бригадисем хӑйсем илнӗ обязательствӑсене мӗнле пурнӑҫласа пынипе сахал интересленет, партиллӗ контроле обществӑллӑ контрольпе ҫыхӑнтарса пымасть. Социализмлӑ ӑмӑртӑва начар организацилениипе пула ӗнтӗ трактористсен йышлӑ пайӗ ҫуракинче тухӑҫсӑр ӗҫлет, сменӑри заданисене пурнӑҫласа пымасть. Кунта мӗнпур тракторсене икӗ сменӑпа ӗҫлеттерессине халӗ те тивӗҫлипе организацилемен, вӗсем чылай вӑхӑт хушши ахаль лараҫҫӗ. Ҫакна пула районта ака-суха ӗҫӗ вӑраха юлса пырать. МТС ӗҫлеме ӗлкӗреймен пирки чылай колхозсенче тырра алӑпа акаҫҫӗ.

Паллах, ҫине тӑрса ӗҫлесен тата мӗнпур механизаторсене социализмлӑ ӑмӑртӑва активлӑ хутшӑнтарсан, МТС ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтерме май пур. Анчах парторганизаци секретарӗ П. Волков юлташ, вӑлах МТС директорӗн политика енӗпе ӗҫлекен заместителӗ, трактор бригадисенче сайра-хутра кӑна пулкалать, механизаторсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе вӑйлатас тӗлӗшпе сахал ӗҫлет, ӗҫри ҫитменлӗхсемпе килӗшсе пурӑнать.

Механизаторсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне ертсе пырассине татӑклӑн вӑйлатни кирлӗ.

П. ПАВЛОВ.

Тупӑшлӑ выльӑх-чӗрлӗхшӗн кӗрешмелле

ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ республикӑри колхозсем умне ответлӑ задачӑсем кӑларса тӑратрӗ: ҫитес ҫывӑх ҫулсенче кашни ӗнерен 1.800-шер литр сӗт суса илессишӗн кӗрешмелле, ытти выльӑх-чӗрлӗхрен тата кайӑк-кӗшӗкрен илекен тухӑҫлӑха та чылай ӳстермелле. Паллах, ҫак ответлӑ задачӑна пурнӑҫа кӗртме колхоз правленийӗсен, фермӑсенче ӗҫлекен колхозниксен тата ялхуҫалӑх специалисчӗсен мӗнпур вӑя хурса ӗҫлемелле.

Мӗнле пурнӑҫласа пыраҫҫӗ-ха ҫак ответлӑ задачӑна Калинино районӗнчи колхозсенче?

Колхозсенчи обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх фермисенчен, уйрӑмах ӗне фермисенчен илекен тупӑш пӗчӗккӗ. Ҫакӑ вӑл ӗнесенчен сӗт ытларах суса илессишӗн кӗрешӳ пуҫарса яманни ҫинчен калать. Ветеринари работникӗсемпе зоотехниксем пухусемпе канашлусенче тухса каланӑ чухне «Трактор», «Волга» тата «Правда» колхозсем ӗне фермисенчен пысӑк тупӑшсем илни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ, вӗсенчен пример илме сӗнеҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗхрен пӗчӗк тупӑш илекен колхозсемпе танлаштарсан, асӑннӑ колхозсенче фермӑри ӗнесенчен сӗт чылай ытларах суса илнӗ. Сӑмахран, иртнӗ ҫулта «Трактор» колхозра кашни сӑвакан ӗнерен 864-шар литр сӗт суса илнӗ. Ку колхозри доярка Соколова юлташ уйрӑм ӗнесен сӗт тухӑҫлӑхне 1.200—1.300 литра ҫитернӗ. «Волга» колхозра кашни ӗнерен 578 литр, «Правда» колхозра—325 литр сунӑ. Курӑнать ӗнтӗ, «Правда» тата «Волга» колхозсем ытти колхозсемшӗн пример пулса тӑма пултараймаҫҫӗ. Вӑл артельсенче те халӗ те обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑша ӳстерессишӗн кирлӗ пек кӗрешмеҫҫӗ.

Ӗне фермисенчи ӗҫсене лайӑхлатса вӗсенчен илекен тупӑша ӳстерес тӗлӗшпе районти колхозсенче ку ҫулта та тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ. Малтанхи виҫӗ уйӑх хушшинче, районӗпе илсен, вӑтам шутпа кашни сӑвакан ӗнерен 88-шар литр кӑна сӗт суса илнӗ. Уйрӑм ялхуҫалӑх артелӗсенче вӑл хисеп тата та сахалтарах. Тӗслӗхрен, «Знамя коммунизма» артельте кашни ӗне уйӑхра 18-шар литр ҫеҫ сӗт панӑ. «Восход» колхозра (председателӗ Семенов юлташ) ку ҫулта ӗнесенчен сӗт суса илменпе пӗрех. Ҫакӑ вӑл колхоз правленийӗ обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫине тимлӗ пӑхманни ҫинчен калать.

— Колхоз руководителӗсем пирӗн ӗҫсемпе интересленмеҫҫӗ, вӗсем фермӑсенче сайра-хутра анчах пулаҫҫӗ,—тесе калаҫҫӗ фермӑра ӗҫлекенсем.

Ҫавӑн пекех Ворошилов ячӗпе, Маленков ячӗпе тӑракан, «Партизан», «Новый путь» тата ытти хӑшпӗр колхозсенче те ӗнесенчен сӗт сахал суса илеҫҫӗ.

Ӗне фермисенчен илекен тупӑш пӗчӗккӗ пулнин тӗп сӑлтавӗ—выльӑх-чӗрлӗх пӑхакан работниксем хушшинчи ӗҫе тӗрӗс йӗркелеменнинчен килет. Пуҫламӑш парторганизацисем ферма работникӗсем хушшинчи агитациллӗ-масӑллӑ ӗҫсене ҫителӗксӗр туса пыраҫҫӗ. Вӗсене вӗрентсе воспитани пама парторганизаци секретарӗсем кирлӗ пек тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫавна пула выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансем час-часах улшӑнса тӑраҫҫӗ.

Нумай ҫӗрте ӗнесене апата вӗтетсе, пӗҫерсе хатӗрлемесӗрех пареҫҫӗ. Ку ӗҫре зоотехниксем енчен пулӑшу ҫук. Калас пулать, зоотехниксем хӑйсем умӗнче тӑракан задачӑна ҫителӗксӗр пурнӑҫлаҫҫӗ, вӗсен ӗҫне районти ялхуҫалӑх пайӗ ҫителӗксӗр тӗрӗслесе тӑрать.

Тупӑшлӑ выльӑх-чӗрлӗхшӗн кӗрешес ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме халех тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла. Зоотехника кӑтартӑвӗсене тӗрӗс пурнӑҫласа пырса, кашни колхозӑн выльӑх-чӗрлӗх фермисенчен пысӑк тупӑш илессишӗн кӗрешмелле.

П. КРАСНОВ.

Лайӑх ӗҫлекен магазинсем

Пӑрачкав раймагӗ тавар ҫаврӑнӑш планне уйӑхран уйӑха ирттерсе тултарать, ӗҫҫыннисен ыйтӑвӗсене лайӑх тивӗҫтерет. Кӑҫалхи пӗрремӗш кварталта магазин тавар ҫаврӑнӑш планне чылай ирттерсе тултарнӑ, укҫа-тенкӗ перекетлесе хӑварнӑ. Раймаг директорӗ И. Пеньков тата профорг М. Крапин юлташсем продавецсен ӑмӑртӑвне организацилес тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Магазин работникӗсем ӗҫҫыннисемпе тачӑ ҫыхӑну тытаҫҫӗ, халӑха хӑш вӑхӑтра мӗнле таварсем кирлине шута илеҫҫӗ.

Чӑвашпотребсоюз правленийӗпе потребительсен кооперацийӗнче ӗҫлекенсен профсоюзӗн обкомӗ Пӑрачкав раймагне куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялав пама йышӑнчӗҫ.

Чӑвашсоюз правленийӗпе потребительсен кооперацийӗнче ӗҫлекенсен профсоюзӗн обкомӗ кӑҫалхи пӗрремӗш кварталта Ҫӗрпӳ раймагӗ тата Сӗнтӗрвӑрри хулинчи апат-ҫимӗҫ сутакан саккӑрмӗш магазин лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ, 8 магазин заведующийӗсене тав тунӑ.

Е. МАКСИМОВА.

Паха та илемлӗ ҫулсемшӗн

Республикӑра ҫул-йӗр строительстви ҫултан-ҫул ӳссе пырать. 1951 ҫулта чулпа грави сарса 47 километр, ахаль ҫул 30 километр тӑршшӗ ытла тунӑ, 350 километра яхӑн кивӗ ҫулсене тӗпрен юсанӑ. Ҫӗнӗ ҫулсем тумалли тата киввисене тӗпрен юсамалли ҫулталӑкри плана 121 процент, кӗперсемпе ытти сооруженисем тумалли тата тӗпрен юсамалли плана 108 процент тултарнӑ. План тӑрӑх ҫул-йӗр ӗҫӗсен хакне виҫӗ процент йӳнетмелле пулнӑ, чӑннипе 4,6 процент йӳнетнӗ. Машинӑсемпе ҫул тӑвакан 50-мӗш номерлӗ станци (МДС) 10 километр тӑршшӗ чул сарса ҫӗнӗ ҫул тунӑ, ҫулталӑкри плана тултарнӑ.

Пӗлтӗр Мурҫашпа Сӗнтӗр районӗсем Шупашкарпа Етӗрне хушшинчи аслӑ ҫул патне ҫитиччен чул сарса ҫул турӗҫ. Халӗ 10 район чул сарнӑ ҫулсем тӑрӑх Шупашкар хулине хӗлӗн-ҫӑвӗн автомашинӑсемпе ҫӳреме пултарать. Кӑҫалхи строительство планне ӑнӑҫлӑн тултарсан, тата тӑватӑ районӑн—Советски, Елчӗк, Ишлей тата Красноармейски районӗсен те ҫавӑн пек май пулать.

1949 ҫулта Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫулсем хӗррине йывӑҫ лартса ӳстермелли ултӑ ҫуллӑх план йышӑннӑччӗ. Виҫӗ ҫул хушшинче 109 километр тӑршшӗ ҫулсем хӗррине йывӑҫ лартнӑ. Вӑрнар, Элӗк, Ишлей, Муркаш районӗсенче 5—7-шер километр, Сӗнтӗрвӑрри районӗнче—7 километр, Ҫӗрпӳ районӗнче—8 километр, Комсомольски районӗнче—10 километр ытла, Елчӗк районӗнче—14 километр тӑршшӗ ҫулсем хӗррине йывӑҫ лартнӑ. Ҫул-йӗр управленийӗ кӑҫал 39 километр ҫурӑ тӑршшӗ ҫул хӗррине йывӑҫ лартма палӑртнӑ.

Кӑҫалхи план тӑрӑх республикӑра ҫул-йӗр строительстви тӗлӗшпе иртнӗ ҫулхисенчен пысӑкрах ӗҫсем туса ирттермелле. Ҫӗнӗ ҫулсемпе кӗперсем тума тата киввисене юсама 21 пин кубометр йывӑҫ, 55 пин кубометр ытларах чул, 96 пин кубометр хӑйӑр, 10 пин кубометр ытларах грави тата вак чул кирлӗ пулать. Чул хатӗрлес ӗҫе ҫӑмӑллатас тесе, Вӑрмар районӗнче механизмсемпе чул кӑларакан тата ватакан предприяти—карьер организациленӗ. Унта экскаватор, скрепер, чул ватакан хӑватлӑ машина тата ытти механизмсем пур. Карьерта кӑҫал 12 пин кубометр чул кӑларма палӑртнӑ. Кунта кӑларакан чулӑн пысӑк пайӗ машинӑсемпе ҫул тӑвакан станцине каять.

Пӗлтӗр Канашпа Ҫӗрпӳ хушшинче ҫӗр кӑмрӑк смали сарса сӑнамалла ҫул туса пӑхнӑ. Ҫӗнӗ ҫул паха, ванмасть, хӗллехи сивӗре те ҫуркаланман. Кӑҫал ҫавӑн пек ҫул Ҫӗрпӳ патӗнче икӗ километр тӑршшӗ тума палӑртнӑ.

Республикӑра хӑватлӑ, йывӑр автомашинӑсемпе механизмсем ҫултан-ҫул нумайланса пыраҫҫӗ. Вӗсемпе туллин усӑ курасси кӗперсен пахалӑхӗнчен те сахал мар килет. Ҫавна асра тытса, кӑҫал нумай ҫӗнӗ кӗперсем тума, киввисене тӗпрен юсама палӑртнӑ.

Чулпа грави сарса чылай ҫулсем тунӑ пулин те, республикӑри ҫулсен пилӗк пайӗнчен тӑвата пайне нимӗн те сарман-ха. Ӗҫсыннисемпе халӑх хуҫалӑхне кирлӗ грузсене татти-сыпписӗр кӳрсе килме, государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли заданисене вӑхӑтра пурнӑҫлама ҫулсене яланах пысӑк пахалӑхпа тытса усрани кирлӗ. Пӗлтӗр МДС Ҫӗмӗрлепе Калинино тата Шӑхасан хушшинчи, Шупашкарпа Вӑрнар хушшинчи ҫулсене грейдерсемпе якатса юсанӑ. Ҫав ҫулсем ҫу каҫиччен лайӑх тӑнӑ. Кӑҫал хӑйӑр сарса МДС механизмӗсемпе 180 километр тӑршшӗ ҫула юсама палӑртнӑ. Ҫак кунсенче МДС хӑшпӗр ҫулсене юсама тытӑннӑ. Ҫул-йӗр участокӗсен те ку ӗҫе анлӑ сарни кирлӗ.

Кӑҫалхи ҫулӑн пуҫламӑшӗнче Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫул-йӗр строительстви валли пӗррӗмӗш кварталта материалсем хатӗрлесси ҫинчен ятарласа постановлени йышӑннӑ, кашни района задани ҫирӗплетсе панӑ. Йывӑҫ касса хатӗрлемелли тата чул кӑлармалли пӗррӗмӗш кварталти плана ирттерсе тултарнӑ, анчах ҫав материалсене тата хӑйӑр турттарса кӑлармалли плана чылай тултарайман. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах Советски, Красноармейски, Ҫӗмӗрле, Чурачӑк районӗсем юлса пыраҫҫӗ.

Предприятисемпе МТС-сен, учрежденисемпе тӗрлӗ организацисен грузсем турттаракан пур автомашинисене те ҫул-йӗр строительстви валли материалсем турттарма хутшӑнтармалла. Пӗлтӗр Сӗнтӗрвӑрри районӗсӗр пуҫне пӗр район та предприятисемпе учрежденисен машинисемпе материалсем турттармалли плана тултарман. Кӑҫал ҫав ҫитменлӗхе тумалла мар. Ҫул-йӗр пайӗсемпе райсовет исполкомӗсен хуҫалӑх руководителӗсене хӑйсен машинисемпе чул, хӑйӑр тата пӗрене турттарма хушас пулать.

Хӑшпӗр ҫул-йӗр работникӗсем ҫулсемпе кӗперсем тӑвас тата юсас ӗҫе ятарласа ирттерекен уйӑхлӑхсенче ҫеҫ тума пӑхаҫҫӗ. Ҫавӑн пек йӑлана пӗтерни кирлӗ. Пирӗн социализмлӑ халӑх хуҫалӑхӗ план тӑрӑх аталанать. Пур ӗҫе те—вӑл шутра ҫул-йӗр строительствине те—план тӑрӑх туса пырсан ҫеҫ ӗҫ вӑйӗпе, турттӑм вӑйӗпе тата пуян техникӑпа лайӑх усӑ курма пулать. Кашни колхозра ҫуракине хутшӑнман колхозниксем пур. Вӗсене ҫул юсама, материалсем хатӗрлеме, йывӑҫсем лартма хутшӑнтарма пулать, хутшӑнтармалла та.

Малта пыракан колхозсем ҫул ҫинче ӗҫлеме ятарласа бригадӑсем уйӑрнӑ. Ҫав бригадӑсем ҫулсене хӗлӗн-ҫӑвӗн юсаса пӑхса тӑраҫҫӗ, ытти колхозниксене ялхуҫалӑх производствинче тухӑҫлӑ ӗҫлеме май параҫҫӗ. Малта пыракансен примерӗпе кашни колхозрах ҫул-йӗр бригади организацилес пулать.

«Коммунизм ялавӗ» хаҫатӑн ӗнерхи номерӗнче Тӑвай районӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем тата ҫул-йӗр работникӗсем 1952 ҫулхи ҫул-йӗр ӗҫӗсен планне срокчен тултарассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту организацилесси ҫинчен Чӑваш республикинчи мӗнпур колхозниксемпе ҫул-йӗр работникӗсене чӗнсе калани пичетленсе тухрӗ.

Мӗнпур ӗҫсыннисен шухӑш-кӑмӑлне палӑртса, тӑвайсем—промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ хӑвӑрт аталанни, автотранспорт вӗҫӗмсӗр ӳсни автомашинӑсемпе хӗлӗч-ҫӑвӗн тата кирек мӗнле ҫанталӑкра та ҫӳреме юрӑхлӑ чул сарнӑ тата ахаль ҫулсем ытларах тума хушать,—теҫҫӗ хӑйсем чӗнсе каланинче. Вӗсем ҫул-йӗр ӗҫӗсен ҫулталӑк планне 1952 ҫулхи июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултарма, пур ӗҫе те пысӑк пахалӑхпа тума, пур ялсем хушшинче тата ҫулсем ҫинче ҫӗнӗ кӗперсем тума, киввисене юсама социализмлӑ обязательство йышӑнчӗҫ.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе ВКП(б) обком бюровӗ тӑвайсен пуҫарӑвне ырларӗҫ.

Райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем, ял Совечӗсемпе пуҫламӑш парторганизацисем ҫак патриотла пуҫару ҫинчен колхозниксемпе ҫул-йӗр работникӗсене тӗплӗн ӑнлантарса пама, ҫул-йӗр строительстви планне срокчен тата пысӑк пахалӑхпа тултарассишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарма тивӗҫлӗ.

Кӑҫал республикӑри ҫул-йӗр работникӗсем Тутар республикинчи ҫул-йӗр работникӗсемпе социализмлӑ договор тунӑ. Ҫав договора чыслӑ пурнӑҫлассишӗн районсемпе колхозсем, ҫул-йӗр бригадисем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑ сармалла.

Вырӑнти Советсенче

Ял Совет председателӗсен вӗренӗвӗ

Ишлей райсовет исполкомӗ ял Совет председателӗсен организацилле-массӑллӑ ӗҫри пӗлӳлӗхне ӳстерес тӗлӗшпе кашни уйӑхрах «председатель кунӗ» ирттерет. Кунта ял Совет председателӗсем совет строительстви ыйтӑвӗсем тӑрӑх докладсемпе лекцисем итлеҫҫӗ, хӑйсен ӗҫ опычӗ ҫинчен каласа параҫҫӗ, хуҫалӑхпа культура строительствинчи малашнехи задачӑсене сӳтсе яваҫҫӗ.

Нумаях пулмасть ял Совет председателӗсем «Критикӑпа самокритика—совет обществине малалла аталантарма пулӑшакан вӑй» тема тӑрӑх доклад итлерӗҫ. Ун хыҫҫӑн Тӑрӑн ял Совечӗ финанс планне тултарас тӗлӗшпе мӗнле ӗҫлени ҫинчен ял Совет председателӗ Никитин юлташ доклад туса пачӗ.

Депутат отчетне итлерӗҫ.

Ҫак кунсенче Етӗрне районӗнчи Нушнар суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем хӑйсен депутачӗ М. Митрофанова юлташӑн отчетне итлерӗҫ. Вӑл хӑйӗн отчетӗнче район иртнӗ ҫулта хуҫалӑхпа культура строительствинче тунӑ ӳсӗмсем тата малашнехи задачӑсем ҫинчен каласа пачӗ.

Отчетлӑ доклад хыҫҫӑн суйлавҫӑсем тухса каларӗҫ. Вӗсем район Совет исполкомӗн ӗҫӗнчи ҫитӗнӳсене палӑртнипе пӗрлех, ҫитменлӗхсене ҫивӗч критиклерӗҫ, ҫӗнӗрен наказсем пачӗҫ. Колхоз председателӗ С. Токарев юлташ райсовет исполкомӗн ялхуҫалӑх, суту-илӳ, культурӑпа ҫутӗҫ пайӗсем ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртрӗ.

Суйлавҫӑсем хӑйсен депутатне чылай паха сӗнӳсем пачӗҫ, малашне тата лайӑхрах ӗҫлеме хушса хӑварчӗҫ.

Ялсене илемлетеҫҫӗ

Вӑрнар районӗнчи Вӑрманкас ял Совет депутачӗсем пуҫарнипе кӑҫал кашни хуҫалӑхра 5-шер тӗп йывӑҫ лартма решени йышӑннӑ.

Ҫак решение пурнӑҫласа, ял ҫыннисем кӗске вӑхӑтра уй-хире хӳтӗлеме тӑвайкки тӑрӑх 3 гектар ҫинче хурӑн, садра 2.300 тӗп крыжовник тата хӑмла ҫырли лартса хӑварчӗҫ. Ялти урамсенче пурӗ 1.000 тӗпе яхӑн йывӑҫ лартнӑ. Ку ӗҫре Н. Петров, К. Васильев, В. Федотов, И. Николаев депутатсем, М. Башмаков, П. Кудряшов тата А. Филиппов колхозниксем паха тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ, вӗсем кашни 7—10-шар тӗп йывӑҫ лартса хӑварчӗҫ.

Финанс планне тултарнӑ

Муркаш ял Совечӗ (Муркаш р.) финанс планне кварталтан квартала ӑнӑҫлӑ тултарса пырать. Ҫапла, кӑҫалхи пӗррӗмӗш квартал планне 128 процент, иккӗмӗш квартал планне майӑн 1-мӗшӗ тӗлне 236 процент тултарнӑ.

Ял Совечӗ финанс ӗҫне депутатсене, ялти актива анлӑ хутшӑнтарать. Вӗсем ял ҫыннисем хушшинче финанс ыйтӑвӗсем тӑрӑх калаҫусем ирттереҫҫӗ, укҫа-тенкӗ тӳлевӗсене срокчен парса татса ыттисене паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑтра ял Совечӗ виҫҫӗмӗш кварталта укҫа-тенкӗ пухмалли плана июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултарассишӗн ӗҫсыннисем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑ сарса ячӗ.

ТИМӖР-ТӐМӐР ПУХАҪҪӖ

Улатӑрти пӑравуссем юсакан завод, автомашинӑсем юсакан центральнӑй мастерской тата автотранспорт кантурӗ тимӗр-тӑмӑр пухмалли ҫур ҫулхи плана срокчен тултарнӑ.

Тимӗр-тӑмӑр пухас тӗлӗшпе хулари урам комитечӗсем паха тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем кӗске вӑхӑт хушшинче пилӗк тонна тимӗр-тӑмӑр пухнӑ.

(«Ленинский путь» хаҫат).

Пирӗн ял каччи

Кӗвви А. Токаревӑн — Сӑмахӗсем Н. Александровӑн


Хӑвӑрт. Хавасланӑ
mf
1. А-тӑл-па шур пӑ-ра-хут а-нать, Ҫы-ра-па хум хыҫ-ҫӑн
хум ҫа-пать. Ка-пи-тан ал сул-чӗ—кур-тӑр пуль,
пи-рӗн ял кач-чи вӑл, туй-рӑр пуль
Хор
f
С А
Т
Б
Ка-пи-тан ал сул-чӗ—кур-тӑр пуль,
1.2.
3
пи-рӗн ял кач-чи вӑл, туй-рӑр пуль, туй-рӑр пуль.

Атӑлпа шур пӑрахут анать,
Ҫырапа хум хыҫҫӑн хум ҫапать.
Капитан ал сулчӗ—куртӑр пуль,
Пирӗн ял каччи вӑл, туйрӑр пуль. 2 хут.

Самолет кӗрлерӗ ял ҫинче,
Ҫулӗ ун выртать халь пит инҫе.
Летчик ункӑ турӗ—куртӑр пуль,
Пирӗн ял каччи вӑл, туйрӑр пуль. 2 хут.

Пӑравус иртет ав чашласа,
Вӑрмансем юлаҫҫӗ янраса.
Машинист йӑл кулчӗ—куртӑр пуль.
Пирӗн ял каччи вӑл, туйрӑр пуль. 2 хут.

Библиотекӑра

Библиотекӑна ҫӗнӗ кӗнекесем илсе килчӗҫ. Икӗ пысӑк шкафа тирпейлӗн вырнаҫтарса хунӑ 1.800 ытла кӗнеке ҫумне татах политикӑллӑ, ялхуҫалӑх, наукӑпа техника, илемлӗ литература кӗнекисем чылай хутшӑнчӗҫ. Вӗсем хушшинче Сталинла премии лауреачӗсем ҫырнӑ кӗнекесем: В. Собкон «Залог мира», А. Кожевниковӑн «Живая вода», Казакевичӑн «Весна на Одере» т. ыт. те. Библиотекӑра ӗҫлекенсем тин ҫеҫ илсе килнӗ кӗнекесене йӗркелесе вырнаҫтарма та ӗлкӗреймерӗҫ, библиотекӑра вулакансем ларса тулчӗҫ. Вӗсенчен нумайӑшӗ В. Собкон ҫӗнӗ кӗнекине ыйтаҫҫӗ. Тахҫанах кӗтеҫҫӗ ӑна вулакансем, кӗнекере мӗн ҫинчен ҫырнине те пӗлеҫҫӗ. Пӗр-пӗр ҫӗнӗ кӗнеке тухсанах, библиотекӑра вӑл кӗнеке ҫинчен калаҫу ирттереҫҫӗ. Вулакансем мӗнле ҫӗнӗ кӗнекесем тухнине, унта мӗн ҫинчен ҫырнине библиотекӑна илсе пыриччен чылай малтан пӗлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа кунта ҫӗнӗ кӗнекесем пӗр кун та выртмаҫҫӗ. Пӗрисем вуласа пӗтерсе пырса парсанах, теприсем илсе каяҫҫӗ.

Ҫӗнӗ кӗнекесене чи малтан библиотекӑри кӗнекесене ялан вуласа тӑракансем илчӗҫ. Пӗр-пӗр кӗнекене вуласа тухсанах, вӗсем унӑн содержанийӗ ҫинчен хӑйсемпе пӗрле ӗҫлекенсене каласа параҫҫӗ. Акӑ, М. Китаев, В. Васильев, П. Соловьева кӑҫал 7—8 кӗнеке вуласа тухнӑ. Вуланӑ кӗнекесем ҫинчен вӗсем хӑйсемпе пӗрле ӗҫлекен юлташӗсене каласа параҫҫӗ.

Библиотекӑра ӗҫлекенсем, унта пыракан кашни колхозника, вӑл колхозра мӗн ӗҫленине кура, кӗнекесем илме сӗнеҫҫӗ. М. Константинов юлташ библиотекӑран кӗнеке илсе вуламан. Иртнӗ ҫул ӑна колхозра сад-пахчи бригадирӗ пулса ӗҫлеме уйӑрса лартнӑ. Библиотека заведующийӗ ӑна сад ӗрчетесси ҫинчен вӗрентекен кӗнекесем илсе вулама сӗннӗ. Вӑл ҫакӑн пек кӗнекесене пӗрин хыҫҫӑн теприне илсе вуланӑ. Кӗнекесем ӑна ӗҫлеме вӗрентнӗ. Пирӗн куҫ умӗнче вӑл «Садри ҫурхи ӗҫсем», «Сад-пахча тӑшманӗсемпе кӗрешесси» ҫинчен ҫырнӑ брошюрӑсене илчӗ.

Пӗррехинче библиотека заведующийӗ колхоз кладовщикне Д. Федоров юлташа чӗнсе илнӗ.

— Акӑ мӗн, тусӑм,—тенӗ кладовщика библиотека заведующийӗ,—халӗ ҫуракине вӑрлӑхсем хатӗрлемелли тапхӑр. «Вӑрлӑхсене акма хатӗрлесси» ҫинчен ҫырнӑ брошюрӑна вуласан лайӑх пулмалла. Малтан хӑвӑр ӑнланса вулӑр, кайран—вӑрлӑх сортланӑ ҫӗрте ӗҫлекенсемпе пӗрле.

Ҫак брошюрӑна вуласа тухни кладовщика та, вӑрлӑх сортлакансене те усӑллӑ пулнӑ. Бригада сортланӑ вӑрлӑхсен пахалӑхне 99 процента ҫитернӗ.

Библиотекӑра кашни кунах пӗрле пухӑнса кӗнекесем вулас, хаҫатсемпе журналсем ҫинчи статьясене вулас, кӗнекесем ҫинчен калаҫу ирттерес ӗҫсене организациленӗ. Кӗнекесене пӗрле пухӑнса вулас ӗҫре библиотека ялти интеллигенцие, комсомолецсене, хута лайӑх пӗлекен колхозниксене хутшӑнтарнӑ.

Библиотека кӗнеке выставкисемпе витринисем организацилет. Кӑҫал «Ҫурхи кун—ҫулталӑк тӑрантарать», «Агитатора—пулӑшу», «Мире—мир», «Сталинла премии лауреачӗсен кӗнекисем» темӑсемпе кӗнеке выставкисем организациленӗ.

Библиотекӑра вулакансен конференцийӗсем час-часах пулаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ С. К. Коротков ҫырнӑ кӗнеке тӑрӑх вулакансен конференцине ирттернӗ. Халӗ библиотека И. Штейман ҫырнӑ «Как создано рекордное караваевское стадо» кӗнеке тӑрӑх вулакансен конференцине туса ирттерме хатӗрленет.

Н. ЦВЕТКОВ.

Заем укҫине тӳлеҫҫӗ

СОВЕТСКИ. (Хамӑр корр.). Районти нумай колхозниксем заем ҫырӑнни хыҫҫӑн укҫине те ҫийӗнчех тӳлеме тӑрӑшаҫҫӗ. Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем 15 пин тенкӗ, «За коммунизм» колхоз членӗсем 11 пин тенкӗ, Киров ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем 10 пин тенкӗ заем укҫи тӳлерӗҫ.

Художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем

Массӑсене коммунизмлӑ воспитани парас тӗлӗшпе художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем те пысӑк ӗҫ тӑваҫҫӗ. Юрӑ, ташӑ, музыка, литература, театр искусстви ӗҫхалӑхӗн пурнӑҫӗпе йӑлине ҫирӗп кӗнӗ. Ҫавӑнпа большевиксен партийӗпе Совет правительстви халӑх творчествине аталантарма пур условисене те туса панӑ.

Художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсен ӗҫне ӗҫсыннисем ҫултан-ҫул йышлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Ҫакӑ республика столицинче Шупашкарта художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсен хисепӗ ӳссе пынинчен те аван курӑнать.

Халӗ Шупашкарта ялан ӗҫлекен 22 хор, 14 драма, 9 музыка, 12 хореографи коллективӗ шутланать. Вӗсенче 1.500 ҫын ытла хутшӑнса ӗҫлет.

Художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем хисеп тӗлӗшӗнчен кӑна мар, идейӑпа художествӑллӑ творчество тӗлӗшпе те вӑйланса пыраҫҫӗ. Кӑҫал педагогика институчӗн драма коллективӗ Гоголӗн «Женитьба», Корнейчукӑн «Калиновая роща», Учительсен ҫурчӗн драма коллективӗ Островскин «Правда хорошо, а счастье лучше», Симоновӑн «Парень из нашего города», «Электрик» клубӗнчи драма коллективӗ М. Горькин «Мещане», Дьяконовӑн «Свадьба с приданым» пьесисене профессиллӗ театрсенчен кая мар лартса пачӗҫ.

Сыхӑну управленийӗнче ӗҫлекенсен хорӗ 1945 ҫултанпа ӗҫлет. Хор составӗнче телефонисткӑсем, письмоносецсем, кантурта ӗҫлекенсем, шоферсем—пурӗ 60 ҫын. Вӗсем ӗҫ хыҫҫӑн пухӑнса ҫӗнӗ юрӑсем вӗренме занятисем ирттереҫҫӗ. Хор репертуарӗнче классиксен, вырӑс тата чӑваш совет композиторӗсен юррисем 100 ытла.

Ҫавӑн пекех художество училищин тата энерготехникумӑн халӑх инструменчӗсен оркестрӗсем, пир-авӑр фабрикин, педагогикӑпа ялхуҫалӑх институчӗсен хореографи коллективӗсем Шупашкар хулинче лайӑх коллективсем шутланаҫҫӗ.

Кӑҫал кана хулари художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем ӗҫсыннисем валли 450 хутчен концертсемпе постановкӑсем панӑ. Вӗсене 10 пин ҫын ытла пырса курнӑ.

Художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсене искусство мастерӗсем — композиторсем, режиссерсем, артистсем пулӑшса пыраҫҫӗ.

Н. АМУРЦЕВ.

Студентсен научнӑй конференцийӗ

Чӑваш ялхуҫалӑх институтӗнче студентсен научнӑй конференцийӗ пулса иртрӗ. Конференцие чылай студентсем хутшӑнчӗҫ, ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх сӑнавсемпе опытсем туни ҫинчен докладсем туса пачӗҫ. Докладсене пурте питӗ интересленсе итлерӗҫ.

Студентсем хӑйсен опычӗсене, сӑнавӗсене институт ҫумӗнчи хуҫалӑхра, колхозсенче туса ирттернӗ. IV-мӗш курсра вӗренекен Стекольщиков студент «Чӑваш АССР-ӗнче ҫӗрулми лартмалли сроксем», Кузнецов—«Ҫӗрулми тухӑҫлӑхӗ ӑна купаланӑ сроксенчен килни», III-мӗш курсра вӗренекен Данилова студентка «Чӑваш АССР-ӗнче физалис акса тӑвасси» ҫинчен научнӑй докладсем туса пачӗҫ.

Конференцире профессорсем, доцентсем тата аслӑ преподавательсем пулчӗҫ. Конференци студентсем научнӑй ыйтусем тӑрӑх опытсемпе сӑнавсем туни мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине лайӑх кӑтартса пачӗ.

П. ИВАНОВ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳсет

МУРКАШ. Районти промкомбинат коллективӗ производство планне уйӑхран уйӑха ирттерсе тултарать. Кӑҫалхи пӗррӗмӗш квартал планне 138 процент ытла тултарнӑ. Халӗ рабочисемпе работницӑсем пурте ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн, ҫур ҫулхи плана пилӗк уйӑхра тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Тимӗр-тӑмӑр цехӗпе чӑпта ҫапакан цех коллективӗсем обязательствӑсене ирттерсе пурнӑҫларӗҫ, иккӗмӗш квартал планне тултарчӗҫ. Ҫак цехсенче ӗҫлекен чылай рабочисем кулленхи ӗҫ нормине 180—200-шер процент тултарса пыраҫҫӗ. Сӑмахран, тимӗр-тӑмӑр цехӗнче ӗҫлекен М. Ярдыковпа Х. Музыков комсомолецсем куллен икшер норма чухлӗ ӗҫ тӑваҫҫӗ. И. Никифоров юлташ ертсе пыракан чӑпта ҫапакан цех ҫур ҫулхи производство планне икӗ хута яхӑн ирттерсе тултарчӗ.

Промкомбинат коллективӗ ҫулталӑкри производство планне Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 35 ҫул тултарнӑ тӗле 185 процент тултарма, продукцин хӑйне ларакан хакне 12 процент чухлӗ йӳнетме пулнӑ.

П. ЯКОВЛЕВ.

Ялти фельдшер

Ӗлӗкхи Атнаш ялӗнчи хресченсен йывӑр пурнӑҫӗ ҫинчен аса илсен, ватӑ старик Яким Захарович Захаров ҫапла калать:

— Ӗлӗк патша саманинче пирӗн ял питех те тӗттӗм тата чухӑн ял пулнӑ. Ял-йышсенчен пурте пекех хура пӳртсенче пурӑннӑ, трахома чирӗпе асапланнӑ. Тӗрлӗрен ерекен чир-чӗрсенчен мӗнле сыхланмалли ҫинчен пире никам та вӗрентмен.

Вулӑсӗпе те пӗр фельдшер кӑначчӗ. Акӑ, пӑхӑр халӗ хамӑр ялти Павел Алексеевич фельдшерах. Мӗнле чир-чӗре пӗлмест вӑл?

Фельдшер П. А. Алексеев юлташ пилӗк ҫул каялла Улатӑрти фельдшерпа акушер шкулӗнчен «отлично» паллӑпа вӗренсе тухнӑ. Ҫавӑнтанпах ӗнтӗ вӑл Атнашри (Шӑхасан районӗ) фельдшер пунктӗнче ӗҫлет. Атнашсем ӑна пурте хисеплеҫҫӗ, таврари ялсенчен те ун патне сывалма ҫӳреҫҫӗ.

Кемеровӑри шахтӑра мастерта ӗҫлекен Валентин Николаев П. Алексеев фельдшер патне тав туса ҫапла ҫырать: «Эсир мана сестрапа иксӗр трахома чирӗнчен сыватрӑр. Эсир пулӑшнипе ҫеҫ Тӑван ҫӗршывшӑн усӑллӑ ҫын пултӑм. ФЗО шкулне вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн мастерсен курсне кӗтӗм. Халӗ ӗҫлетӗп. Уйӑхне 2.000—2.400 тенкӗ таран ӗҫ укҫи илекен пултӑм. Сире мана сыватнӑшӑн чӗререн тав туса, ҫав усал чире—трахомӑна хӑвӑртрах пӗтерме ырӑ сунатӑп».

Кун пек чӗререн тав туса ҫырнӑ ҫырусене Алексеев юлташ тӑтӑшах илсе тӑрать.

— Ӗҫре тӑрӑшни халӑх умӗнче курӑнса тӑрать. Ял культурӑлланни, колхозниксем таса та сывӑ пурӑнни, чир-чӗрсем сахалланни ӗҫлес кӑмӑла хӑпартать,—тет фельдшер.

Ял варринче аякранах пысӑк та илемлӗ ҫурт курӑнса ларать. Ку Атнашри фельдшер пункчӗ пулнине илемлӗ сӑрсемпе колхозри комсомолец Г. Кондратьев ҫырнӑ вывеска лайӑх кӑтартса парать. Ку фельдшер пунктне Атнаш ял Совечӗ 1950 ҫулта лартса панӑ. Кӗретпӗр пункта. Урайсене шап-шур ҫуса тасатнӑ. Ку Мария Александрова санитаркӑн ӗҫӗ. Урайне вӑл каҫсеренех ҫуса тасатать. Кӑмакине ирех хутса ӑшӑтать. Пунктра пурӗ виҫӗ пӳлӗм, тӑватӑ пысӑк кантӑк. Кунта тӗкӗр, занавескӑсем, сехет, улӑштарса тӑхӑнмалли ултӑ халат, медицина инструменчӗсемпе эмелсем хумалли шкафсем, икӗ умывальникпе алшӑллисем, вӗретнӗ шыв бакӗ, жалоба кӗнеки т. ыт. те пур.

Фельдшер пунктӗнче «Медицина кӗтесси» организациленӗ. Ку кӗтесе медицина енӗпе ҫырнӑ кӗнекесемпе брошюрӑсене ҫиппе тире-тире ҫакса тухнӑ. Кунта пурӗ 56 кӗнеке. Коридорӑн тепӗр енче трахома чирӗпе кӗрешмелли майсене кӑтартакан фотовыставка та пур.

П. Алексеев юлташ ялти активпа тачӑн ҫыхӑнса ӗҫлет. Клуб совечӗпе санитари активӗ уйӑхра икӗ хутчен «Медик» ятлӑ алпа ҫырнӑ бюллетень кӑларса тӑраҫҫӗ. Ку бюллетене медицина работникӗсем, санитарипе ҫутӗҫ комиссийӗн членӗсем, учительсем ҫырса тӑраҫҫӗ. Бюллетене фанерӑран тунӑ. Унӑн пӗтӗм формийӗпе содержанийӗ стена хаҫачӗ евӗрлех. Бюллетень уйрӑм темӑсене ҫутатса парать. Акӑ, илер «Ҫирӗп те сывлӑхлӑ ачасемшӗн» умстатьяпа кӑларнӑ номере. Кунта ҫамрӑк ачасене ерекен чирсенчен мӗнле сыхланмаллине, кӑкӑр ӗмекен ачасене мӗнле пӑхмаллине тата ун ҫинчен мӗнле кӗнекесем вуламаллине кӑтартса панӑ. Тепӗр номерте «Ҫӑлсемпе тарасасене юсавлӑ тытӑр», «Кашни колхозникӑн килӗ таса пултӑр», «Ферма пӳртӗнче умывальник кирлӗ», «Обществӑллӑ санитари мӗнле ӗҫлет» статьясене пичетленӗ. Уй-хир ӗҫченӗсем «Медик» бюллетене пысӑк хисепе хураҫҫӗ.

П. А. Алексеев фельдшер хӑйӗн ӗҫне юратать.

Паян Павел Алексеевич патне ялпора бухгалтер пулса ӗҫлекен Николай Николаевич Николаев кӗчӗ. Вӑл Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗ.

— Аманнӑ вырӑн ҫӗрӗпе сывӑрма памарӗ, тӗрӗслеттерсе пӑхма килтӗм,—тет вӑл.

Фельдшер фонемотоскоп илсе инвалидӑн ӳпкине, кӑкӑрне—аманнӑ вырӑнӗсене тӗрӗслет. Инвалидӑн сывлӑхне упрама мӗн тумалли ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса, Канаш больницин рентген кабинетне кӗме направлени ҫырса парать.

Фельдшер пӳлӗмне пӗр колхозница кӗрет.

— Эпӗ хӗрарӑм гигиени ҫинчен ыйтса пӗлме килтӗм,—тет вӑл. Фельдшер колхозницӑна консультаци парса ярать. Ку енӗпе мӗнле кӗнеке вуламаллине каласа парать. «Медицина кӗтессинчен» илсе кӗнекине те парсах ярать.

Пӗр 10—12 ҫулхи пионер фельдшер пунктне ӗсӗклесе чупса кӗрет те йывӑр хыпар пӗлтерет.

Павел Алексеевич хӑвӑрт тумланать те, тӗрлӗ медицина инструменчӗсене илсе кӗсйине чикет. Трахсестра Мария Ивановнӑна вӑхӑтлӑха хӑйӗн вырӑнне юлма хушать:

— Тен, тытӑнса тӑмалла пулӗ манӑн. Чирлисем килсен пулӑшу парса яр. Хӑв пӗлеймесен, кала, эпӗ киличчен тӑхтачӑр.

Ольга Рязанова колхозница сасартӑк йывӑр чире ӳкнӗ. Вӑл пӗр-ик сӑмах калама та сывлама та пӑрахнӑ. Пӳртрисем пурте: вилчӗ, тесе шутланӑ. Ывӑлӗ Витя фельдшер патне тухса чупнӑ.

Павел Алексеевич «вилнӗ» колхозница умне пырать те кӑштах шухӑша каять. Унтан стена ҫумӗнче ҫакӑнса тӑракан тӗкӗре илет, Рязановӑн тути патне тытать. Йывӑр чирлӗ колхозницӑн кӑшт сывлӑшӗ тухни тӗкӗр ҫинче палӑрать. Фельдшер вара хӑвӑрт медицина инструменчӗсене кӑларать, укол тӑвать...

Тепӗр икӗ-виҫӗ кунтан чирлӗ Рязанова аванах калаҫма тытӑнать, куллен-кун сывалса, самайланса пырать.

Фельдшер Алексеев йӗркелесе пынипе колхозри обществӑллӑ ҫуртсене тасалӑх енчен мӗнле тытнине вунӑ кунта пӗр хут тӗрӗслесе тӑраҫҫӗ. Кашни кил тӑрӑх валеҫсе панӑ санитари паспорчӗсем ҫине тасалӑх ҫинчен паллӑ тӑваҫҫӗ.

Акӑ, Анастасия Сорокина колхозница фельдшера ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илчӗ.

— Иртнинче пӳртӗн тасалӑхӗ питех марччӗ те, кӑштах кӳренсе ҫӳрерӗм,—тет вӑл.

Таса пурӑнни сывлӑхшӑн усӑлли ҫинчен кӗскен ӑнлантарнӑ хыҫҫӑн, фельдшер тасалӑх паспорчӗ ҫине «лайӑх» тесе паллӑ турӗ.

Вӑхӑт каҫ енне сулӑнсан, Павел Алексеевич фермӑсенче пулчӗ. Чӑх-чӗп пӑхакансем пурӑнакан пӳртӗн урайӗ таса марришӗн, чирлӗ чӑхсене пӳртре тытнишӗн, умывальник ҫуккишӗн ферма заведующине Е. Степанов юлташа асӑрхаттарчӗ. Тасалӑх журналӗ ҫине паллӑ туса, тасамарлӑха пӗтерме хушрӗ.

Халӑхӑн сывлӑхне упрас енӗпе пӗтӗм вӑй-халне, пӗлӗвне парса ӗҫлекен фельдшера клубра, фермӑра ӗҫлекен колхозниксем патӗнче, уй-хир бригадисенче медицина ыйтӑвӗпе тӑтӑшах докладсемпе лекцисем туса панине курма пулать, вӑл гигиенӑпа тасалӑх ҫинчен каласа ӑнлантарать, колхозӑн радиоузелӗ урлӑ калаҫусем ирттерет.

Колхоз клубӗ. Клуба кӗнӗ ҫӗрте пӗлтерӳсем ҫакмалли хӑма ҫакӑнса тӑрать. Унта паян совет медицини тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен П. А. Алексеев фельдшер лекци вуласа парасси ҫинчен ҫырнӑ. Илемлӗ те таса клуб каҫхине халӑхпа шӑпах тулчӗ.

Клуб заведующийӗ Н. Захаров коммунист фельдшера сӑмах пачӗ.

Фельдшер Алексеев юлташ Совет правительствипе Ленин—Сталин партийӗ тата аслӑ Сталин ӗҫсыннисен сывлӑхне ҫирӗплетсе пырассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшса ӗҫлени ҫинчен калакан нумай тӗслӗхсем илсе кӑтартрӗ. Вырӑссен паллӑ ученӑйӗсем—Мечников, Сеченов, Павлов, Пирогов, Бурденко, СССР Медицина наукин действительнӑй членӗ Филатов, Лепешинская, Бошьян тата Сталинла премии лауреачӗсем тунӑ чаплӑ ӗҫсем ҫинчен каласа парать.

Лекци колхозниксене хытӑ интереслентерчӗ. Вӗсем лектора нумай ыйтусем пачӗҫ.

* * *

Павел Алексеевич — ӳссе пыракан медицина работникӗ. Ӗҫрен пушӑ вӑхӑтсенче вӑл хӑйӗн пӗлӗвне ӳстерес тӗлӗшпе ӗҫлет. Парти пуҫламӑш организацийӗ ҫумӗнче ВКП(б) историне вӗренмелли кружокра вӗренсе пырать. Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин произведенийӗсене чылайӑшне вуласа тухнӑ. Унсӑр пуҫне медицина ыйтӑвӗпе ҫырнӑ кӗнекесене те тӑтӑшах вулать. Вӑл «Медицинский работник», «Коммунизм ялавӗ» тата районти «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаҫатсене ҫырӑнса илет. Иртнӗ 1951 ҫулта Павел Алексеевич тӑрӑшнипе трахома чирне пӗтерсе пыраҫҫӗ. Юлашки ҫулсенче Атнаш ял Совечӗн территоринче ерекен чир пӗрре те пулман.

— Пирӗн ял Совечӗнче I—II-мӗш стадиллӗ трахомӑна вуҫех пӗтернӗ, III—IV-мӗш стадисем кӑна юлнӑ, вӗсене сывӑх вӑхӑтрах сыватӑпӑр,—тет фельдшер.

Г. ИСАЕВ.

Тӗнчери лару-тӑру

ВӐРҪА ХАТӖРЛЕНМЕЛЛИ «ПӖТӖМӖШЛЕ ДОГОВОРА» ХИРӖҪ

Америка империалисчӗсем тата вӗсем уйӑрса лартнӑ Бонри правительсем нимӗҫ халӑхне вӑрҫа хатӗрленмелли «пӗтӗмӗшле договор» йышӑнтарасшӑн. Ҫав договор тӗллевӗ Германи пайланса тӑнине ӗмӗрлӗхе хӑварасси тата Хӗвеланӑҫ Германири халӑх массисене вӑрҫӑра вилсе пӗтмелли салтаксем туса хурасси пулать. Нимӗҫ халӑхне ҫавӑн пек «пӗтӗмӗшле договора» йышӑнтарма хӑтланнине хирӗҫ протестлемелли юхӑм пӗтӗм Германире вӑйланса пырать.

Юлашки кунсенче Гамбург, Киль, Дюссельдорф, Мюнхен, Мангейм хулисенче тата Хӗвеланӑҫ Германири ытти хуласенче те пысӑк митингсемпе пухусем пулнӑ. Митингсемпе пухусенче пулнӑ ҫынсем Аденауэрӑн сутӑнчӑкла политикине хирӗҫ тӑни ҫинчен уҫҫӑн каласа панӑ, Германие пӗр ҫӗршыв туса хума, пӗрлӗхлӗ Германипе мирлӗ договор тума ыйтнӑ. Хӗвеланӑҫ Германири ҫамрӑксем те ҫавӑн пек требовани кӑларса тӑратнӑ. Ҫамрӑксем Эссен хулинче питӗ пысӑк демонстраци организациленӗ. Демонстрантсене хирӗҫ ҫапӑҫма Бонри влаҫсем лайӑх хӗҫпӑшалланнӑ полици илсе пынӑ. Полици ҫамрӑк патриотсен юнне тӑкса, вӗсен демонстрацине салатса янӑ.

Нимӗҫсен ирӗклӗ ҫамрӑкӗсен союзӗн Центральнӑй Советне янӑ телеграммӑра Вильгельм Пик ҫапла калать: «Машинӑсемпе ҫӳрекен полици ҫарӗсене пӑшалпа пеме приказ пани Аденауэрпа Лер питӗ хӑраса ӳкнине тата нимӗн тума аптӑраса тӑнине кӑтартакан паллӑ пулать. Хӗвеланӑҫ Германири ҫамрӑксенчен нумайӑшӗ ҫӗршыва ҫӗнӗрен хӗҫпӑшаллантарнине хирӗҫ тата Хӗвеланӑҫ Германири ҫамрӑксене ҫарта пулма тара тытнӑ салтаксем шутласа ют ҫӗршыв ҫыннисен аллине парассине хирӗҫ кӗрешме ытларах та ытларах пӗрлешсе пыраҫҫӗ. Ҫавна кура Аденауэрпа Лер хытӑ шикленсе ӳкнӗ, урса кайнӑ. Полициллӗ террорла ӗҫсем тунипе тата ҫар диктатури туса хунипе Аденауэрпа Лер Хӗвеланӑҫ Германири халӑха ирӗксӗрлесех вӑрҫа хатӗрленмелли «пӗтӗмӗшле договор» йышӑнтарма хӑтланаҫҫӗ».

Бонри правительсем хӑйсен Америкӑри хуҫисемпе нимӗҫ халӑхӗнчен вӑрттӑн, халӑха пӗлтермесӗр, килӗшӳ тума тӑрӑшаҫҫӗ. Ку ӗҫре вӗсем тӗрлӗ маневрсем туса хӑтланаҫҫӗ, «пӗтӗмӗшле договор» Германи никама пӑхӑнман ҫӗршыв пулассине шантарса тӑрать, тесе суяҫҫӗ. Анчах нимӗҫсенчен ытларахӑшӗ урӑхла шухӑшлать. Нимӗҫ халӑхӗ Германи пайланса тӑнине тата Хӗвеланӑҫ Германие США-н вӑрҫӑ [illegible] ниҫан та килӗшес ҫуккине буржуалла хаҫатсем те пытарса тӑма пултараймаҫҫӗ. «Аахенер нахрихтен» хаҫат ҫапла ҫырать: «Нимӗҫсем «пӗтӗмӗшле договор» тутарасшӑн мар, вӗсем мирлӗ договор тутарасшӑн. Вӗсем «Германи тата демократи» тенисем пӗр-пӗрне хирӗҫле, тавлашуллӑ сӑмахсем ан пулччӑр, нимӗн тавлашмалли ҫук тата лайӑх ӑнланмалла сӑмахсем пулса тӑччӑр, теҫҫӗ...».

Бонри «парламентра» та «пӗтӗмӗшле договора» йышӑнассине хирӗҫ тӑракансем йышлӑ. Ку вӑл уйрӑмах кӑтартуллӑ тӗслӗх пулса тӑрать. Халӑх хытӑ тӑрӑхнине кура правительствӑна хутшӑннӑ партисенчен суйланнӑ нумай депутатсен тӗрлӗ майпа чееленсе хӑтланма тивет. Бонри «парламент» председателӗн заместителӗ Карло Шмидт ҫак кунсенче радио тӑрӑх сӑмах тухса каланӑ. Вӑл «пӗтӗмӗшле договора» критиклеме пӑхнӑ, нимӗҫ халӑхӗ вӑрҫа хирӗҫ пулнине, вӑрҫасшӑн мар пулнине уҫҫӑнах йышӑннӑ.

Халӑхӑн анлӑ массисем Совет Союзӗ Германипе мирлӗ договор тӑвас тата пӗрлӗхлӗ, мире юратакан, демократиллӗ Германи государствине туса хурас пирки панӑ сӗнӳсене чунтан-чӗререн ырлаҫҫӗ. Ҫав сӗнӳсем нимӗҫ халӑхӗн тӗп интересӗсемпе пӗтӗмпех килӗшӳллӗ пулса тӑраҫҫӗ, Европӑра тата пӗтӗм тӗнчере мирлӗ пурнӑҫ тума май параҫҫӗ. Совет Союзӗн мире юратакан политики И. В. Сталин юлташ Германи халӑхӗ фашизм пусмӑрӗнчен хӑтӑлнӑранпа ҫичӗ ҫул тултарнӑ май Отто Гротеволь юлташ патне янӑ ҫырура ҫӗнӗрен питӗ уҫҫӑн палӑрчӗ.

«Германи халӑхӗпе Демократиллӗ Германи Республикин Правительствине, Германишӗн тата пӗтӗм тӗнчери миршӗн усӑллӑ ӗҫ тӑвас шутпа, пӗрлӗхлӗ, никама пӑхӑнман, демократиллӗ тата мире юратакан Германи туса хурассишӗн, хӑвӑртрах мирлӗ договор тутарассишӗн тата оккупаци ҫарӗсене Германирен илсе тухтарассишӗн ӑнӑҫлӑ кӗрешме ырӑ сунатӑп», тенӗ ҫырура.

Германи пӗрлӗхӗшӗн тата мирлӗ договор тутарассишӗн кӗрешесси пӗтӗм нимӗҫ халӑхӗн чунтан-чӗререн тӑрӑшса туса пымалли ӗҫӗ пулса тӑчӗ. Ҫак тӗрӗслӗхшӗн пыракан кӗрешӳре Демократиллӗ Германи Республикинчи ӗҫҫыннисем питӗ пысӑк ӗҫ тӑваҫҫӗ. Хӑйсен ҫӗршывӗн малашнехи кун-ҫулӗшӗн ҫав тери пысӑк ответлӑ пулса тӑнине ӑнланса илсе, вӗсем Америкӑри вӑрҫӑ пуҫарма хӗтӗртекенсен кирепсӗр ӗҫӗсене сыхӑ асӑрхаса тӑраҫҫӗ, мирлӗ майпа Германи государствине пӗрлештерессишӗн пӗтӗм вӑя хурса тӑрӑшаҫҫӗ.

Нимӗҫ халӑхӗ вӑрҫа хатӗрленмелли «пӗтӗмӗшле договора» хирӗҫ, пӗрлӗхлӗ, никама пӑхӑнса тӑман, демократиллӗ тата мире юратакан Германишӗн кӗрешнине прогрессивлӑ пӗтӗм этемлӗх ырлать.

БОЛГАРИ ХАЛӐХӖН ПУРНӐҪӖ ЛАЙӐХЛАНСА ПЫРАТЬ

Болгари Халӑх Республикин Министрӗсен Совечӗпе Болгарири коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ постановлени йышӑннипе Болгарире укҫа реформи ирттернӗ, апат-ҫимӗҫ таварӗсене карточкӑсӑр сутмалли йӗрке тунӑ, таварсене ваккӑн сутмалли хаксене йӳнетнӗ.

Укҫа реформи ирттернипе пула Болгари левӗпе (укҫапа) тавар нумайрах туянма май пулса тӑнӑ, лева тӗнчери чи ҫирӗп укҫапа—совет тенкипе танлаштарса хисеплемелле туни унӑн хакне ҫирӗплетнӗ.

Болгари Халӑх Республикин Министрӗсен Совечӗпе Болгарири коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн постановленийӗнче ҫапла каланӑ:

«Лев хакне совет тенкипе танлаштарса хисеплемелле туни пирӗн ҫӗршывӑн валюти доллартан уйӑрлнине пӗлтерет, доллара, капитализмлӑ мӗнпур ҫӗршывсенчи валютӑпа пырса тивнӗ пекех, кризис пырса тивет, ҫавӑн пирки вӑл пӗрмаях йӳнелсе пырать».

Апат-ҫимӗҫ таварӗсене карточкӑсемпе сутмалли йӗркене пӑрахӑҫланипе, апат-ҫимӗҫ таварӗсен хакӗсене йӳнетнипе (6 процентран пуҫласа 50 процент таран) тата халӑха куллен кирлӗ таварсен хакӗсене йӳнетнипе (5 процентран пуҫласа 20 процент таран), ҫавӑн пекех ӗҫҫыннисен ӗҫ укҫипе пенси укҫине ӳстернипе пула Болгари халӑхне, ҫӗнӗ укҫапа шут- [illegible] усӑ пулать. Ҫӗнӗ вӑл Халӑх демократиллӗ Болгарире ӗҫҫынни массисен пурнӑҫне малалла лайӑхлатса пырас тӗлӗшпе ҫӗнӗ пысӑк утӑм тунине пӗлтерет.

Болгари халӑхӗ социализм никӗсӗсене хывнӑ ҫӗрте пысӑк ҫитӗнӳсем тума пултарнӑ, ҫакӑ вара ҫӗршыв пурнӑҫӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан пысӑк ӗҫсене пурнӑҫлама май панӑ.

Республикӑри ӗҫҫыннисем тӑваттӑмӗш ҫул ӗнтӗ халӑх хуҫалӑхӗн пилӗк ҫуллӑх планне пурнӑҫлассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак вӑхӑт хушшинче промышленноҫӑн машинӑсем тӑвакан предприятийӗсене, металлурги, хими тата ытти отраслӗсен ҫӗнӗ предприятийӗсене нумай лартнӑ. Фабрикӑсемпе заводсенче ӗлӗк урӑх ҫӗршывсенчен кӳрсе тӑнӑ нумай йышши япаласене туса кӑларма вӗренсе ҫитнӗ. 1951 ҫултах промышленность продукцийӗн пӗтӗм хисепӗ, вӑрҫӑччени вӑхӑтрипе танлаштарсан, виҫӗ хут ҫурӑ ӳснӗ.

Болгари ялхуҫалӑхӗ те пысӑк ҫитӗнӳсем тума пултарнӑ. Ҫӗршывра акмалли ҫӗр лаптӑкне ҫултан-ҫул пысӑклатса пыраҫҫӗ, мелиораци ӗҫӗсене нумай тӑваҫҫӗ, уй-хире типӗ ҫанталӑкран хӳтӗлемелли вӑрман тӑрӑхӗсем лартаҫҫӗ. Яла темиҫе пин тракторпа ытти ялхуҫалӑх машинисем илсе пынӑ. Ҫӗнӗ техникӑпа тата агротехникӑн чи лайӑх меслечӗсемпе анлӑ усӑ курни иртнӗ ҫулта пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ӳстерсе пухса кӗртме май панӑ. Сӑмахран, тулӑ тухӑҫлӑхӗ, вӑтамран илсен, 1950 ҫулхинчен 40 процент, хӗвелҫаврӑнӑш тухӑҫлӑхӗ 50 процент, кукуруза тухӑҫлӑхӗ 90 процент ытларах пулнӑ, ытти тырӑсен тухӑҫлӑхӗ те ӳснӗ.

Коммунистсен партийӗпе халӑх правительстви ӗҫҫыннисем умне пилӗк ҫуллӑх плана тӑватӑ ҫулта пурнӑҫламалла тесе задача лартнӑ. Ҫӗршыври ӗҫҫыннисем хытӑ тӑрӑшса ӗҫленипе тата халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсенче те халиччен тунӑ ҫитӗнӳсене асра тытсан, ҫав задача ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланасси малтанах курӑнса тӑрать.

Болгари Халӑх Республикин Министрӗсен Совечӗпе Болгарири коммунистсен партии Центральнӑй Комитечӗн постановленийӗ ҫинчен ӑнлантарса парса, «Работническо дело» хаҫат ҫапла ҫырать: «Болгари Халӑх Республики социализм ҫулӗпе ҫирӗппӗн те шанчӑклӑн малалла каять. Социализм тума Болгари халӑхӗ Совет Союзӗнчен вӗренсе пырать. Совет халӑхӗ мирлӗ ӗҫре тунӑ ҫӗнтерӳсем Болгари халӑхне тӑрӑшса ӗҫлеме хавхалантараҫҫӗ. Пирӗн халӑха социализм ҫулӗ ҫинчен пӑрма, вӑл хӑватлӑн малалла каяссине чарма пултаракан вӑй халӗ ҫук ӗнтӗ. Партипе правительствӑн постановленийӗ экономикӑпа политика тӗлӗшӗнчен ҫав тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑл пирӗн ҫӗршыва, пирӗн пурнӑҫа малалла аталантарса пыма питӗ нумай пулӑшать. Социализмла хуҫалӑхпа культурӑна ҫӗнӗ[illegible] хӑватлӑ чечеклентермелли, ҫавпа май ӗҫҫыннисен пурнӑҫне лайӑхлатмалли условисем пулса пыраҫҫӗ».

КАНАДА ХАЛӐХӖ МИРШӖН КӖРЕШЕТ

Ҫак кунсенче Торонтӑра мире сыхлас ыйтупа Пӗтӗм Канадӑри конференци иртнӗ. Конференцире виҫӗ пин ҫын ытла пулнӑ. Вӗсене Канада халӑхӗн мӗнпур сийӗсем суйласа янӑ.

Конференци миршӗн тата тӗнчери халӑхсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса килӗштерсе пурӑнассишӗн кӗрешес ӗҫе вӑйлатассишӗн тӑрӑшас паллӑпа иртнӗ. Делегатсем йышӑннӑ решенире: аслӑ державӑсем калаҫса татӑлса мире сыхламалли килӗшӳ тунипе, хӗҫпӑшалсене чакарнипе, мӗнпур ҫӗршывсем пӗр-пӗрин хушшинче сутуилӳ тӑвассине сарса пынипе ҫеҫ тӗнчери лару-тӑрури йывӑрлӑхсемпе экономикӑри йывӑрлӑхсене сирсе яма пулать, тесе уйрӑмах хытӑ палӑртнӑ.

Канадӑри влаҫсем ҫӗнӗ вӑрҫа хатӗрленес политика тытса пыраҫҫӗ. Ҫар расхочӗсене витме ҫӗршыв бюджетӗнчи укҫан 58,5 проценчӗ пӗтет. Васкасах хӗҫпӑшаллантарнипе пула промышленноҫӑн тӗрлӗ отраслӗсенче йывӑрлӑхсем тухса тӑраҫҫӗ, рабочисем ӗҫсӗр тӑрса юлаҫҫӗ, апат-ҫимӗҫпе ытти таварсем тӑтӑшах хакланса пыраҫҫӗ, халӑх пурнӑҫӗ ытларах та ытларах начарланать. Кӑҫал бюджетран ялхуҫалӑхӗ валли памалли укҫа хисепне ҫурри ытла чакарнӑ, ҫав укҫа хисепӗ бюджетра 1,5 процента ҫеҫ шутланать. Халӑх [illegible] сыхлас ӗҫпе халӑха вӗрентес ӗҫ валли укҫа тата сахалтарах пама палӑртнӑ. Налогсем, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 40,5 процент ӳснӗ.

Канада влаҫӗсем США-ри вӑрҫӑ пуҫарма тӑрӑшакансен интересӗсене пурнӑҫламалли, ҫӗршыва пӗтерме пултаракан политика тытса пыраҫҫӗ пулсан, ҫав политикӑна хирӗҫ кӗрешес юхӑм ҫӗршывра анлӑрах та анлӑрах сарӑлать. Мире сыхламалли килӗшӳ тума чӗнсе калани ҫине ҫӗршер пин канадец алӑ пуснинчен акӑ мӗн уҫҫӑнах курӑнса тӑрать: влаҫсем Канадӑна ҫӗнӗ вӑрҫа кӗртсе яма хӑтланнине халӑх массисем ырламаҫҫӗ.

Конференцие пухӑннисем, сӑмахран, Квебек провинцийӗн делегацийӗ, ҫакна палӑртнӑ: полици хытӑ хӗсӗрлет пулин те, миршӗн тӑракансем вӑрҫӑ хӑрушлӑхне хирӗҫ кӗрешес ӗҫе вӑйсӑрлатмаҫҫӗ, пачах урӑхла, вӗсем ҫав ӗҫе вӑйлатса пыраҫҫӗ, Канада салтакӗсене Корейӑран каялла илсе килме ыйтаҫҫӗ, тӗнчери ҫӗршывсем хушшинчи ыйтусене мирлӗ майпа йӗркелемелле тӑвассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫӗршывӑн тӗрлӗ пайӗсенче мире сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен ҫӗнӗ комитетсем тӑваҫҫӗ. Мире сыхламалли килӗшӳ тума чӗнсе калани ҫине алӑ пуснисен йышӗ пысӑкланса пырать.

Конференци Америка империалисчӗсем Корейӑра питӗ тискер преступленисем тунине сивленӗ, бактериллӗ вӑрҫӑшӑн айӑплӑ ҫынсене хытӑ айӑпласа наказани пама ыйтнӑ.

Конференци йышӑннӑ решенисем Канадӑри миршӗн тӑракансене тата хытӑрах кӗрешме, миршӗн, ҫӗнӗ вӑрҫӑ пуҫарма тӑрӑшакансене хирӗҫ тата активлӑрах кӗрешме хавхалантараҫҫӗ.

Д. БОЧАРОВ.

Пакистанри культура деятелӗсем ССР Союзӗнче мӗн курни ҫинчен каласа параҫҫӗ

КАРАЧИ, майӑн 13-мӗшӗ. (ТАСС). «Доон» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫав хаҫатӑн редакторӗ Алтаф Хусейн майӑн 8-мӗшӗнче Карачи хулинчи журналистсен союзӗн канашлӑвӗнче сӑмах тухса каланӑ. Вӑл Совет Союзне кайса килни, тӗнчери ҫӗршывсен экономикӑллӑ канашлӑвӗнче пулни ҫинчен каласа кӑтартнӑ. «Совет Союзӗнчи халӑхсем хушшинче вӑрҫӑ пирки шавлани ҫук, вӗсем мирлӗ пурӑнасшӑн», тенӗ вӑл. Алтаф Хусейн тата Совет Союзӗн экономика тӗлӗшӗнчи ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен, Совет Союзӗ начар аталаннӑ ҫӗршывсене чӑн-чӑн пулӑшу пама пултарни ҫинчен каланӑ.

Ыйтусем ҫине ответлесе, Алтаф Хусейн: «Совет Союзӗнче ӗҫсӗрлӗх ҫук, хут пӗлменлӗхе, чӑннипе илсен, пӗтернӗ», тенӗ.

Карачи хулинчи журналистсен майӑн 9-мӗшӗнче пулнӑ канашлӑвӗнче Совет Союзне кайса килни ҫинчен «Имроз» хаҫат редакторӗ Туфайл Ахмед сӑмах тухса каланӑ. Вӑл уйрӑмах ҫакна палӑртнӑ: «Совет Союзӗнче рабочисен пурнӑҫӗ питӗ лайӑх, вӗсене тӳлевсӗрех медицина пулӑшӑвӗ параҫҫӗ, вӗсене укҫа тӳлеттермесӗрех вӗрентеҫҫӗ, ватӑлсан е чирлӗсен социальнӑй обеспечени енӗпе пулӑшу параҫҫӗ.

«Имроз» хаҫат Лахора хулинчи сутуилӳ ӗҫне вӗрентекен колледжӑн директорӗ Мохаммед Хасан хӑй Тӗнчери ҫӗршывсен экономикӑллӑ канашлӑвне Мускава кайса килни ҫинчен ҫырнӑ статьяна пичетлесе кӑларнӑ. «Экономикӑллӑ канашлу Пакистана пысӑк пулӑшу парӗ, мӗншӗн тесен канашлу пынӑ вӑхӑтра Пакистан чӗртаварне сутма пысӑк рынoксем пурри, тата Пакистан промышленноҫне аталантарма кирлӗ таварсене туянма май пурри палӑрчӗ», тесе ҫырнӑ Мохаммед Хасан.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗ майӑн 16-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ:

Корея Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсемпе пӗрле, оборонӑра тӑрса ҫапӑҫса, тӑшман хӑшпӗр вырӑнсенче атакӑсем тунине ӑнӑҫлӑ сирсе янӑ, тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене тата техникине чылай пӗтернӗ.

Вӑтаҫӗрти фронтра, Чхолвонь патӗнче тӑшман, артиллери тата авиаци пулӑшнипе, Халӑх ҫарӗн позицийӗсем ҫине темиҫе хутчен те тапӑнса атакӑсем тунӑ. Анчах Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем, хытӑ хирӗҫ тӑнипе тата контратакӑсем тунипе пула, тӑшман каялла чакнӑ, унӑн салтакӗсемпе офицерӗсем вилсе, аманса тата тыткӑна лексе пӗр взвод чухлӗ ытла пӗтнӗ.

Кымхва хулинчен хӗвелтухӑҫнерехри вырӑнта тӑшман Халӑх ҫарӗн позицийӗсем ҫине виҫӗ хутчен тапӑнса атакӑсем тунӑ. Анчах унӑн каялла чакма тивнӗ. Тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 50 ҫын ытла вилнӗ.

Ытти фронтсенче нимӗнле уйрӑмах паллӑ улшӑну та пулман.

Паян зенитнӑй чаҫсем тата самолетсене хирӗҫ ҫапӑҫакан салтаксем тӑшманӑн виҫӗ самолетне персе ӳкернӗ тата пӗр самолетне сиенленӗ.

Кочжедо утравӗ ҫинче тыткӑнри ҫар ҫыннисене Америка командованийӗ ҫаплах хытӑ хӗсӗрлет

НЬЮ-ЙОРК, майӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчӗ ҫакӑн ҫинчен пӗлтернӗ: Кочжедо утравӗ ҫинче Корея Халӑх ҫарӗн тата Китай халӑх добровольцӗсен ҫарӗн тыткӑнри салтакӗсен лагерӗн ҫӗнӗ начальникӗ пулма Боутнер бригаднӑй генерала уйӑрса лартнӑ. Боутнер тыткӑнри ҫар ҫыннисене питӗ хаяррӑн хӗсӗрлемелли политика тытса пыма пуҫланӑ. Корреспондент пӗлтернинчен ҫакӑ паллӑ пулнӑ: лагерьте Женевӑра йышӑннӑ конвенцие пӑсса преступлениллӗ ӗҫсем тӑвасси—тыткӑнри ҫар ҫыннисене ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе вӗлересси тата асаплантарасси, тыткӑнри ҫар ҫыннисем ҫинче бактериллӗ хӗҫпӑшалпа атомлӑ хӗҫпӑшала сӑнаса пӑхасси малалла та пулса пырать.

НЬЮ-ЙОРК, майӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчен килекен хыпарсем Америка влаҫӗсем тыткӑнри ҫар ҫыннисен юнне ҫаплах тӑкни ҫинчен калаҫҫӗ. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчӗ Кочжедо утравӗ ҫинчен пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер утрав ҫинчи тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗн ҫӗнӗ коменданчӗ Боутнер бригаднӑй генерал корреспондентсемпе калаҫнӑ, ҫавӑн чухне корреспондентсем пӑшал сассисем илтнӗ.

Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчӗ Кочжедо утравӗ ҫинчен ҫапла пӗлтерет: Боутнер бригаднӑй генерал тыткӑнри ҫар ҫыннисем лагерӗнче питӗ хаяр дисциплина пулмалли йӗрке тума шутлани ҫинчен каласа панӑ. Вӑл лагере сыхлакан ҫынсене яланах хӑйсемпе пӗрле пистолет илсе ҫӳреме хушакан приказ кӑларнӑ.

Вӑрҫа хатӗрленмелли „пӗтӗмӗшле договора" хирӗҫ

ГАМБУРГРИ 150 ПИН ҪЫНЛА ДЕМОНСТРАЦИ

БЕРЛИН, майӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви Гамбургран ҫакӑн ҫинчен пӗлтерет: ӗнер унта вӑрҫа хатӗрленмелли «пӗтӗмӗшле договора» хирӗҫ тата предприятисенче ыйтусене татса памалли йӗрке ҫинчен калакан закон текенскерне хирӗҫ протестлесе демонстраци ирттернӗ. Демонстрацие Гамбургри рабочисемпе служащисем 150 пин ҫын ытла тухнӑ. Вӗсем Профсоюзсен ҫуртӗ умӗнчи площаде пынӑ.

Хӗвеланӑҫ Германири профсоюзсен пӗрлешӗвӗн сутӑнчӑкла руководствинче Германири социал-демократла парти членӗсем пуҫ пулса тӑраҫҫӗ. Ҫав руководство Хӗвеланӑҫ Германири ӗҫҫыннисене демонстрацисене Аденауэрӑн вӑрҫа хатӗрленмелли политикине хирӗҫ кӗрет- [illegible] чарнӑ. Анчах вӗсем ҫавӑн пек хӑтланни Гамбургра ӑнӑҫлӑ пулман. Демонстрантсем «Эпир предприятисенче ыйтусене татса памалли йӗрке ҫинчен калакан закона хирӗҫ тата «пӗтӗмӗшле договора» хирӗҫ кӗрешетпӗр», тесе ҫырнӑ лозунг ҫӗклесе пынӑ. «Дейче верфт» текен предприятире ӗҫлекен рабочисем хӗрлӗ ялавсем тата хура-хӗрлӗ ылтӑн ялавсем айӗнче «предприятисенчи ыйтусене татса памалли йӗрке ҫинчен калакан закон, Аденауэр законӗ тата «пӗтӗмӗшле договор» тӗп пулччӑр!» тесе ҫырнӑ транспарант йӑтса пынӑ.

Харбург тата Гамбург-Вергедорф хулисенче те Аденауэрӑн вӑрҫа хатӗрленмелли политикине хирӗҫ протестлесе демонстрацисем ирттернӗ. Ҫав демонстрацисене 20 пин ӗҫҫынни ытла хутшӑннӑ.

ВЕЛИКОБРИТАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖН ИСПОЛКОМӖН ПОЛИТИКӐЛЛӐ ӖҪСЕН КОМИТЕЧӖН ҪӖНӖ СОСТАВӖ

ЛОНДОН, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, иртнӗ эрне вӗҫӗнче Великобританири коммунистсен партийӗн исполкомӗн ларӑвӗ пулнӑ. Ларура исполкомӑн политикӑллӑ ӗҫсен комитетне суйланӑ. Политикӑллӑ ӗҫсен комитетне ҫаксем кӗнӗ: С. Эбботт, М. Беннет, Э. Барис, Дж. Р. Кэмпбелл, Р. Палм Датт, Джон Голлан, Нора Джеффри, Н. Керриган, Д. Клугман, У. Локлен, Дж. Магон, Дж. Мэтьюс, Ф. Пирэтин тата Гарри Поллит.

Америка империалисчӗсем Индонези экономикине йывӑрлӑха кӗртсе ӳкернӗ

ДЖАКАРТА, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Сингапур рынокӗнче каучук сутӑн илме килӗшекенсем сахалланнӑ, унӑн хакӗ йӳнелнӗ. Ҫакӑ вара Индонези экономикине пысӑк йывӑрлӑха кӗртсе ӳкернӗ, мӗншӗн тесен Индонези урӑх ҫӗршывсене нимӗнрен нумайрах каучук сутса тӑрать.

Хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Суматра утравӗн кӑнтӑрти пайӗнчи складсемпе портсенче ҫӗршер пин тонна каучук выртать. Каучук тӑвакан хресченсем хӑйсем ӗҫлесе тунӑ продуктсене сутма пултараймаҫҫӗ, вӗсен ирӗксӗрех ҫӗр ӗҫлеме пӑрахса хуласене кайма, укҫа ӗҫлесе тупма кайма тивет, анчах хуласенче ӗҫсӗр тӑрса юлнисем вӗсемсӗр те нумай.

Индонези каучукне никамран нумайрах Пӗрлешӳллӗ Штатсем илсе тӑраҫҫӗ пулсан, вӗсем халӗ юриех каучук сутас ӗҫре йывӑрлӑх туса хума тӑрӑшнӑ. США, хӑй каучук илсе тӑракан монополист пулса тӑнипе усӑ курса, каучук хакне чакарттарасшӑн.

Индонезири сутуҫӑсем Индонези таварӗсене Пӗрлешӳллӗ Штатсене кӑна сутас йӗркене пӑрахӑҫлама ыйтаҫҫӗ.

«Харпан ракят» хаҫат ҫакна кӑтартса парать: Индонези халӑхӗ вӑхӑтра йывӑрлӑха кӗрсе ӳкни сӑлтавӗ вӑл ҫӗршыв экономикине США империалисчӗсене пӑхӑнтарни пулса тӑрать. Хаҫат «Америка пулӑшӑвне йышӑнас мар», тесе чӗнет. Ҫавӑн пек «пулӑшу» Индонези экономикине Америка интересӗсене пӑхӑнтарас тӗллев тытать. Индонезин «пӗр тан праваллӑ тата пӗр-пӗриншӗн усӑллӑ» принцип тӑрӑх кӑна суту-илӳ килӗшӗвӗсем тумалла, тет хаҫат.

Азири тата Лӑпкӑ океан тӑрӑхӗнчи ҫӗршывсенчи миршӗн тӑракансен конференцийӗ пухӑнасси пирки

ШАНХАЙ, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Азири тата Лӑпкӑ океан тӑрӑхӗнчи ҫӗршывсенчи миршӗн тӑракансен конференцине пухма йышӑнни ҫинчен Китайри общественность нумай сӳтсе явать. Кун пирки Шанхайри хаҫатсем паян нумай материалсем пичетлесе кӑларнӑ.

«Цзефанжибао» хаҫат ҫапла ҫырать: ҫак конференци Азире тата Лӑпкӑ океан районӗсенче мире сыхласа хӑварассишӗн кӗрешес юхӑма вӑйлатас тӗлӗшпе тунӑ пысӑк ӗҫ пулать. Ҫав юхӑм Америка империалисчӗсен агрессине хирӗҫ кӗрешес ӗҫри, миршӗн, демократишӗн тата наци никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешес ӗҫри хӑватлӑ вӑй пулса тӑрать. Ҫитес вӑхӑтра пухӑнакан конференци, паллах ӗнтӗ, ҫав кӗрешӗве малалла вӑйлатса пыма хавхалантарӗ.

«Вэньгуйбао» хаҫат хӑйӗн уйстатьинче ҫапла ҫырать: пулас конференци Азири тата Лӑпкӑ океан тӑрӑхӗнчи ҫӗршывсенчи халӑхсен анлӑ массисен шухӑш-ӗмӗчӗсемпе килӗшӳллӗ, вӑл ҫавӑн пекех пӗтӗм тӗнчери халӑхсен шухӑш-ӗмӗчӗсене палӑртса тӑрать. Америка империалисчӗсем васкасах Японине ҫӗнӗрен хӗҫпӑшаллантараҫҫӗ, Япони милитаризмне ҫӗнӗрен ҫӗклентереҫҫӗ, Японине агрессиллӗ вӑрҫа хутшӑнтарма пур ӗҫсене те тӑваҫҫӗ. Тепӗр енчен, вӗсем Корейӑра мир тӑвас пирки пыракан калаҫусене вӑраха тӑсаҫҫӗ, бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ кураҫҫӗ, тесе ҫырать хаҫат.

Азири тата Лӑпкӑ океан тӑрӑхӗнчи ҫӗршывсенчи халӑхсен Америкӑри вӑрҫӑ пуҫарма хӗтӗртекенсене хирӗҫ кӗрешме тата тачӑрах пӗрлешес пулать. Нимӗн иккӗленмелли те ҫук, мир вӑйӗсем ҫак кӗрешӳре ҫӗнтерӗҫ, тет хаҫат.

ВАСКАСАХ ХӖҪПӐШАЛ ХАТӖРЛЕНИНЕ ПУЛА АНГЛИ МОНОПОЛИЙӖСЕМ ПУЯҪҪӖ

ЛОНДОН, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). «Файненшл таймс» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Англири 929 компанин усламӗсем 1951 ҫулта 71 миллион кӗренке стерлинг чухлӗ ӳснӗ, ҫав компанисем 1951 ҫулта пӗтӗмпе 511 миллион кӗренке стерлинг услам илнӗ.

Кроса хатӗрленеҫҫӗ

ВАРМАР. Районти спорт обществисемпе физкультура коллективӗсем майӑн 25-мӗшӗпе июнӗн 22-мӗшӗ хушшинче велосипедистсен массӑллӑ ӑмӑртӑвне хутшӑнма хатӗрленеҫҫӗ. Кроса велосипедпа ҫӳреме пултаракан комсомолецсемпе ҫамрӑксем пурте хутшӑнаҫҫӗ.

Ӑмӑрту пуҫаракансенчен пӗри—«Маяк» колхозри комсомол организаци кроса тӑрӑшса хатӗрленет. Кунта чылай комсомолецсемпе ҫамрӑксем тата «Колхозник» спорт обществи членӗсем ҫӗнӗ велосипедсем туянчӗҫ. Халӗ ялта 65 ҫамрӑкӑн велосипедсем пур. Физкультура коллективӗ кроса лайӑх хатӗрленсе ирттерме уйрӑм секци тунӑ. Секци членӗсем эрнере икӗ кун хушши занятисем ирттереҫҫӗ.

«Маяк» колхозра кроса 100 ҫын ытла хутшӑнать. Вӗсенчен нумайӑшӗ ГТО значокӗн нормисене пама хатӗрленеҫҫӗ. Ҫак уйӑхра комсомолецсемпе ҫамрӑксен вӑйӗпе ялта стадион тӑваҫҫӗ. Унта футболла выляма, ҫӑмӑл атлетика тата ытти спорт вӑййисем валли площадкӑсем, чупмалли ҫулсем пулаҫҫӗ.

«Дружба», «Правда», «Победа» тата Сталин ячӗпе тӑракан колхозсенче те велосипедпа чупакансен йышӗ ӳссе пырать. Ҫак ялсенчи вуншар ҫамрӑк кроса хутшӑнма хатӗрленет. Кросс ирттерме спорт площадкисем тӑваҫҫӗ.

Райпотребсоюз магазинӗсем юлашки уйӑх хушшинче районти ӗҫҫыннисене 100 велосипед ытла сутнӑ.

Сураки ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑ ирттернӗ хыҫҫӑн малта пыракан колхозсенче ӗҫҫыннисен ҫуркуннехи уявне—акатуй ирттереҫҫӗ. Акатуйра массӑллӑ спорт вӑййисем, велосипедпа чупакансен ӑмӑртӑвӗсем те пулаҫҫӗ.

Спортсменсен республикӑри семинарӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта спортсменсен республикӑри семинарӗ ӗҫлеме пуҫларӗ. Семинара республикӑри хуласемпе районсенчен пурӗ 57 спортсмен пуҫтарӑннӑ, вӗсем вунӑ кун хушшинче ҫӑмӑл атлетика, баскетбол тата футбол вӑййисен техникине вӗренеҫҫӗ, спорт ыйтӑвӗсем тӑрӑх лекцисем итлеҫҫӗ.

Семинарта СССР спорт мастерӗ М. Гущина, «Искра» спорт обществинчен Д. Мирошниченко, ҫавӑн пекех физкультурӑпа спорт ӗҫӗнче чылайранпа ӗҫлекен Б. Новошинов, М. Зефиров, Н. Солдатченко юлташсем лекцисем вулаҫҫӗ. Семинар участникӗсем «Молния» спорт обществин стадионӗнче практикӑллӑ занятисенче пулаҫҫӗ.

ДРАМА КОЛЛЕКТИВӖСЕМ ВАЛЛИ ҪӖНӖ ПЬЕСӐСЕМ

Ялсенчи драма коллективӗсем валли республикӑри халӑх творчестви ҫуртӗ Мдиванин «Шӑлнӗпе пиччӗшӗ», Васильевӑн «Халӑх сасси», Кравченкӑн «Талантсем», Мальцевпа Венкстернӑн «Иккӗмӗш юрату», Федоровӑн «Янрать вӑрман», Самсониянӑн «Пирӗн фермӑра» ятлӑ пьесисене чӑвашла куҫарса кӑларнӑ.

Ҫак пьесӑсенче пӗтӗм тӗнчери тӳрӗ кӑмӑллӑ ҫынсем миршӗн кӗрешнине, колхозлӑ ял ҫӗнелсе пынине аван кӑтартса панӑ. Пьесӑсем колхоз клубӗсенче лартма ҫӑмӑл.

Асӑннӑ пьесӑсене республикӑри халӑх творчестви ҫуртӗнчен ҫырӑнса илме пулать.

Редакторӗ В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Клеверпа тимофеевка вӑрри туянӑр!

Главзаготзерно хатӗрлев пункчӗсенче клеверпа тимофеевка вӑрри пур. Курӑк вӑрлӑхӗсене ҫакӑнта илмелле: Канашри хатӗрлев пунктӗнче—Канаш хули, Колхознӑй урам, 5-мӗш ҫурт; Ҫӗрпӳ станцинче; Шупашкарти хатӗрлев пунктӗнче—Шупашкар хули, Труховой урам, 7-мӗш ҫурт, телефон №3-92 (икӗ хут шӑнкӑртаттармалла) тата Вӑрнар районӗнчи Кольцовка ялӗнче.

Главзаготзерно Чӑваш республикинчи кантурӗ.

РЕСПУБЛИКӐРИ ВЫРАС ДРАМА ТЕАТРӖНЧЕ
Паян, майӑн 18-мӗшӗнче,
„Дама невидимка"
Майӑн 20-мӗшӗнче—
„НАКАНУНЕ"
Спектакльсем каҫхине 8 сехет те 30 минутра пуҫланаҫҫӗ.

„РОДИНА" КИНОТЕАТРТА
Паян, майӑн 18-мӗшӗнче,
пур сеанссенче те
„Сорочинская ярмарка"
Сеанссем 10, 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлӑ редактор—0-67, ответлӑ редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-71, парти пурнӑҫ пайӗ—4-17, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 01349 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.